*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

# ХРЕСЧЕН САССИ

23 (2536) [1]
Хакĕ ирĕклĕ
Эрнере икĕ хут тухать

2015
апрель ака 1
ЮНКУН

1991 çулхи апрелĕн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă

АТАЛАНУ ÇУЛĔПЕ

## Ĕçлемесĕр çăкăр çиеймĕн

**Шупашкар районĕнчи «Чурачикский» пĕрлешÿ пурнăç таппинчен юлмасть, чĕртаварне вырăнтах тирпейлесе суту-илĕве ăсатать. Çакă çĕр ĕçченĕсене пысăк тупăш кÿрет.**

### «Чуна парса вăй хумалла»

Пысăк витере типĕ, сывлăш уçă. Шултра, шурă-хура ĕнесем те тап-таса. Эпир çитнĕ тĕле юриех çуса тасатнă тейĕн.

– Вĕсем яланах çапла. Выльăх тесе мĕншĕн тислĕкпе вараланмалла? Уçă сывлăшра ĕнесем чирлемеççĕ. Пĕр вырăнта кăкарса тăратни сиенлĕ, çавăнпа витере ирĕклĕнех çÿреççĕ, – каласа парать ферма заведующийĕ Вячеслав Филиппов. – Çулла ешĕл апата витенех турттаратпăр. Фермăри ĕçе-хĕле йăлтах механизациленĕ. Ятарлă залра хăрăсах 24 ĕне сума пулать. Сĕт пăрăх тăрăх тÿрех холодильника юхса кĕрет.




Хуçалăхăн мăйракаллă шултра выльăх 1401 пуç, çав шутра сăвăнаканни – 545. Пилĕк çул каялла хуçалăх ăратлă выльăх ĕрчетсе сутма тытăннă. Ку палăрмаллах тупăш кÿрет. Ăратлă ĕнесен сăвăмĕ те пысăк. Акă пĕлтĕр пĕрлешÿре 2878,3 тонна сĕт туса илнĕ. Çулталăкра кашни ĕнен сăвăмĕ 5745 килогрампа танлашнă.

– Ÿсĕмсем тума чуна парса ĕçлемелле, – терĕ Вячеслав Филиппов.

Сĕте Етĕрнери, Куславккари, Шупашкарти заводсене ăсатаççĕ. Вăтамран литрĕ 22-23 тенке кайса ларать. «Хак пахалăхран килет. Пахалăх – апатран. Ĕнен сĕчĕ чĕлхи çинче тесе ахальтен каламан», – пĕлтерчĕ заведующи. Выльăх умĕнчен сенаж-силос, фураж татăлмасть. Тырă фуражне аякран туянса тăкакланмаççĕ, ăна пĕлтĕр çителĕклех хатĕрленĕ. Республикăра Чурачăксем пĕрремĕш хут çĕнĕ технологипе фураж хывнă: уйран кĕнĕ тырра типĕтмесĕрех вĕтетсе вăрăм полиэтилен михĕсене тултарнă та фермăпа юнашар хурса тухнă. Специалистсем каланă тăрăх – унăн тутлăлăхĕ пысăк, выльăх та юратса çиет, ÿт хушаслăхĕ, сăвăм аван. Тата вĕсене упрама ятарлă склад кирлĕ мар, хĕлĕпех уçă çĕрте выртаççĕ. Пленка михĕ çурăлса сиенленесрен асăрханмалла кăна.

Кашни ĕçĕн хăйĕн вăрттăнлăхĕ. Хуçалăхра ĕнесене тĕрлĕ ушкăна уйăрнă: сĕт лайăх е вăтам антараканнисем, пăрулаmаллисем тата ытти те. Тухăçлисене кайран ĕрчетме суйласа илеççĕ.

– Чĕртавар хакĕ унчченхипе танлаштарсан палăрмаллах ÿсрĕ. Ăна кура тупăшне те илмелле пек. Анчах тăкакĕ те иртнĕ çулхинчен капашсăр хăпарса кайрĕ-çке, – палăртрĕ пĕрлешÿ пуçлăхĕ Евгений Шалеев. – Çавăнпа чĕртавара вырăнта тирпейленинчен лайăххи çук.

### Специалистсене – çĕнĕ хваттерсем

«Чурачикский» уçă пĕрлешĕве вунă çул каялла йĕркелесе янă. «Ним çук çĕртен пур туса ĕçлесе кайрăмăр. Ун чухне ĕне шучĕ вуннă пулнă-и?» – асаилет ертÿçĕ. Пултаруллă çынна çакă та хăратман, тенкĕ çумне тенкĕ хушса хуçалăха çĕклесе янах. Халĕ унăн акакан-сухалакан лаптăксем 2241 гектар. Иртнĕ çул 4 пин тонна ытла тырă пухса кĕртнĕ, гектар пуçне 28,7 центнер тухнă. Уй-хирте, фермăра хăватлă техника хуçаланать. Выльăх апачĕ туса илмелли комбайна та республикăра чи малтан Чурачăкра туяннă. Ăна кура ыттисем те хаклă техникăна илме тытăннă. Çапах паян тупăшлă ĕçлесе пыракан предприятин те чăрмавĕ сахал мар.

– Специалистсем çитменнипе йывăртарах. Пирĕн ялхуçалăх академийĕ пурнăç таппинчен юлса пырать. Çамрăксен практика çук, вĕренсе тухсан та ĕçлеме пĕлмеççĕ. Тĕрĕссипе, ытти çĕршыврипе танлаштарсан хамăр та пурнăçран юлтăмăр. Акă паян 500 ĕнене 7 доярка пăхни ытлашшипех. Ĕçе-хĕле механизациленине шута илсен пире икĕ доярка та çителĕклĕ. Анчах вĕсем ун пек килĕшмеççĕ – йывăр имĕш, ывăнаççĕ. Пысăк йышпа укçа сахалрах тухни те хăратмасть вĕсене, – каласа парать Евгений Шалеев.



Сăнÿкерчĕксене www.cap.ru сайтран илнĕ

Хуçалăх ĕçне специалистсене явăçтарма территоринчех икĕ хутлă çурт çĕклесе лартнă. Сăрă чултан купаланăскере тул енчен пурăнмалли çурт-йĕр тесе калама та йывăртарах. Строительство ĕçĕсене вĕçлеймен-ха, иккĕмĕш хута хăпармалли пусма та тимĕртен, вăхăтлăха тунăскер. Çутă, вăрăм коридора вĕр çĕнĕ алăксем тухаççĕ. Ертÿçĕ хваттерсене кĕрсе курма сĕнчĕ. Пĕр тата икĕ пÿлĕмлĕ хваттерсенче хăтлă та илемлĕ, ирĕклĕ, çутă.

2-мĕш стр. ➔

КĔСКЕН

### Хушма укçа – спорт объекчĕсем валли

Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев палăртнă тăрăх – Раççей правительствин йышăнăвĕпе пирĕн республикăна 357,7 млн тенкĕ хушма укçа уйăрнă. Вăл физкультурăпа спорт объекчĕсем çĕклеме тата вĕсене çĕнетме каять.

Кĕтнĕ укçа сумми республикăна çитнĕ. Унпа Пăр керменне (7000 çын вырнаçмалăх), маунтинбайк центрне (икĕ бассейнлă) тума, Шупашкарти 2-мĕш номерлĕ ача-пăча спорт шкулĕн хĕллехи спорт енĕсен центрне тата "Олимпийский" стадиона тĕпрен юсама, Канашра футбол вылямалли площадкăна, Шупашкарта физкультурăпа спорт комплексне хута яма усă кураççĕ.

### Пулăшупа хăвăрт аталанмалла

Канаш хулинчи социаллă пурнăç тытăмĕ çывăх вăхăтра палăрмаллах улшăнмалла. Кунти экономикăна тĕрлĕ шайри бюджетран 638 млн тенкĕ укçа пырса кĕмелле. 2020 çулччен вара пĕтĕмĕшле инвестицисен калăпăшĕ 3 млрд тенкĕрен иртмелле. Çакă халăха 2 пине яхăн ĕç вырăнĕпе тивĕçтерме май панине палăртнă республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев монохуласене аталантаракан фонд ертÿçипе Дмитрий Скривановпа тĕл пулнă май. Тĕлпулăва Чăваш Енĕн премьер-министрĕ Иван Моторин та хутшăннă.

Канаш пĕлтĕр Раççей шайĕнчи конкурса хутшăнса патшалăх пулăшăвне илме тивĕçлĕ 5 монохула йышне лекнĕ. Иван Моторин пĕлтернĕ тăрăх – Раççейре хăвăрт аталанакан территорисем çинчен калакан саккун вăя кĕме тытăннă. Канаш хулин те малашне çакнашкаллисен шутне лекме шанăç пур.

### Хĕрÿ тапхăр пуçланчĕ

Кăçал лартнă-акнă лаптăксем 565 пин гектар йышăнмалла. Çав шутра пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши культурăсем – 49,7, çĕрулми – 6,4, пахчаçимĕç – 8, ытти культура 43 процент.

Кĕрхисене пĕлтĕр 89 548 гектар акса хăварнă. Чылай районта вĕсене апатлантарма тухнă ĕнтĕ. Мартăн 30-мĕшĕ тĕлне 3 537 гектар çинче минерал удобренийĕпе апатлантарнă. Комсомольски, Куславкка, Сĕнтĕрвăрри, Йĕпреç тăрăхĕсенче уйрăмах лайăх ĕçлени палăрать. Нумай çул ÿсекен курăксене те 1285 гектар çинче минерал удобренийĕ хывнă. Шупашкар, Çĕрпÿ енче кун пек лаптăксем самай.

Çак вăхăт тĕлне пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши культурăсен вăрлăхне 49 972 тонна хывнă. Ку кирлин 105 проценчĕ. Çав шутра кондицилли 85 процент. Улатăр, Пăрачкав, Муркаш, Йĕпреç тăрăхĕсенче кондицие ларман вăрлăх чылай.

Çĕрулми вăрлăхне 1205 тонна яровизациленĕ. Ака-суха ирттерме 20 пин тонна минерал удобренийĕ кирлĕ пулать. Хальлĕхе 38,9 проценчĕ çеç пур.

ÇЫРĂНТАРУ – 2015

**Хисеплĕ вулакансем! Кăçалхи иккĕмĕш çур çулта «Хресчен сасси – Кил» хаçат уйрăм кăларăмпа тухма пăрахать. Июль уйăхĕнчен пуçласа вăл 8 страницăпа тухса тăракан «Хресчен сасси» хаçат ăшĕнче пулĕ.**
**Унăн индексĕ – 54838.**
**Халĕ хăшĕ-пĕри «Хресчен сасси – Кил» ятлă уйрăм хаçата çырăнса илме сĕнни «Хыпар» Издательство çурчĕпе пачах та çыхăнман!**

### ÇАНТАЛĂК

| Шупашкарта | Вăхăт | 1.04 | 2.04 |
|---|---|---|---|
| Температура, °С | 2–4 сехетре<br>14–16 сехетре | –1<br>+3 | –1<br>+4 |
| Юр çăвать | | – | – |
| Атмосфера пусăмĕ, мм | | 751 | 749 |

**Пурнăç таппи**

# Тар тăкса тунă укçа перекетлĕ

**Куславкка районĕнчи Василий Семенов фермер хуçалăхĕ 1999 çулта йĕркеленнĕ. Çак тапхăрта вăл аталанса ура çине çирĕп тăнă. Хальхи вăхăтра хуçалăхăн усă куракан çĕрĕсем 400 гектар. Çĕрулми, купăста, хăяр, томат, çĕрçырли, тырă туса илеççĕ. Пахча-çимĕçе вырăнтах тирпейлеççĕ. Ятарлă савăтсенче тăварласа хуласене ăсатаççĕ. Куснарсен тăварланă купăстипе хăярĕ ВДНХ-ан ылтăн тата кĕмĕл медалĕсене тивĕçнĕ. Пысăк тухăçшăн хуçалăха та наградăсем парса хавхалантарнă. Машинăпа трактор паркĕ те пуян, çулсерен çĕнĕ техника хушăнать. Ура çинче çирĕп тăракан хуçалăха Чăваш Республикин ялхуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Василий Николаевич ывăлне, Иван Семенова, шанса панă. Хăй те юнашарах, çамрăка вĕрентсе, пулăшса пырать.**



Сăнÿкерчĕке www.cap.ru сайтран илнĕ

### Малтанхи кредитпа – пĕрремĕш трактор

– 90-мĕш çулсенче, фермер хуçалăхне пуçарса янă чухне, патшалăхран нимĕнле пулăшу та пулман. Укçа çитменнипе вăрлăх, удобрени, ГСМ туянма пысăк процентпа парăма кĕреттĕмĕр, – асаилет Иван Васильевич. – Ун чухне малтанхи хут 15-17 гектар çĕрулми лартса хăвартăмăр.

Вăл вăхăтра Иван шкулта кăна вĕреннĕ-ха, анчах ашшĕн кашни утăмне паянхи пек астăвать. Хăй те вăй çитнĕ таран ăна пулăшма тăрăшнă. Фермерăн кашни пусшăн тар тăкма тивнĕ. Çитĕнÿпе пĕрлех такăнмалли те пайтах пулнă. Çу çумăрлă килнипе айлăмри лаптăкра çĕрулми шыв айне пулса çĕрсе кайни, кĕркунне кăларса ĕлкĕрейменнипе тухăç юр айне юлни, çĕклейми парăмсем – пурне те асаилсен çÿç вирелле тăрать. Мĕнле чăтса ирттернĕ-ши тÿлĕк? Кĕтмен инкек, чăрмав та фермера çапса хуçайман. Ывăнса, тарăхса çитнĕ вăхăтра алă сулас патнех çитнĕ вăхăтсем те пулнă, çапах малаллах талпăннă, лару-тăру улшăнасса шаннă.

– Пĕрремĕш кредита 2007 çулта илтĕмĕр те трактор туянтăмăр. Çакă пире малалла аталанма вăй хушрĕ темелле. Тинех хамăра шанчăклăрах туйма тытăнтăмăр. Унччен вара çынсенчен техника шыраса хăшкăлнă. Икĕ çул пĕртен-пĕр тракторпа уй-хир ĕçĕсене туса пытăмăр. Унтан кредит илсе ытти техника туянма тытăнтăмăр. Лаптăксем те ÿссех пычĕç, – каласа парать Иван Семенов. – Патшалăх ялхуçалăхне пулăшма программăсем йышăнни пире вăй илме пулăшрĕ. Çăмăллатнă кредитсемпе татăлма та ансатрах.

Иртнĕ çул фермер 241 гектар çĕр сухаласа акса хăварнă. Ку малтанхи çулхипе танлаштарсан икĕ хут ытларах, çав шутра тырă – 92, пахчаçимĕç 52 гектар. Пахчаçимĕçĕн пысăк пайне çĕрулмипе купăста йышăннă. Унсăр пуçне хăяр, помидор, пăрăç, ыхра, ытти культурăсем те пур. Юлашки вăхăтра Семеновсем çырла та çитĕнтереççĕ. Унăн лаптăкĕ 2,5 гектара çитнĕ ĕнтĕ. Иртнĕ çул пылак çимĕçе 9 тонна туса илнĕ. Вăл та лайăх сутăннă, хуçисене тупăш кÿнĕ.

Тухăç çулленех ÿссе пырать. Пĕлтĕр купăста гектар пуçне вăтамран – 791, çĕрулми 256 центнер пуçтарса кĕртнĕ.

Чĕртавара сутнипе пĕрлех ăна вырăнтах тирпейлеççĕ. Купăста, хăяр, помидор, пăрăç тăварлама ятарлă цех уçнă. Хĕлĕпех купăста тăварлаççĕ. Çимĕçе пысăк хуласене ăсатаççĕ. Шупашкарта, Çĕнĕ Шупашкарта суту-илÿ вырăнĕсем пур вĕсен. Яланхи клиенчĕсем хуçалăхранах курттăммăн туянса каяççĕ. Сăмах май, пахчаçимĕç калчине теплицăсенче çитĕнтереççĕ. Капла йÿнĕрех, шанчăклăрах.

### Куснар – купăста çĕршывĕ

Куславкка тăрăхĕ Семеновсем купăста туса илнипе палăрнă. Районта кĕр мăнтăрĕпе кăчăр-качăр çимĕçĕн уявне иртересси йăлана кĕнĕ ĕнтĕ. «Купăста Вăççи», – текелеççĕ Василий Николаевича шÿтлесе те хисеплесе. Çапла калама сăлтавĕ те пур. Пĕлтĕр кăна Куснарсем 3321 тонна купăста пуçтарса кĕртнĕ. Уй-хирте сутнипе пĕрлех управа та хывнă. Çур енне пысăк хранилищĕри сывлăш температури ăшăнса каясран йывăç ешчĕксене юрпа тултарса маччана çитиех купаланă.

– Март уйăхĕ вĕçлениччен сивĕ тăрать. Хытах ăшăтса яриччен сутса пĕтерĕпĕр. Сывлăш температурине йĕркелесе тăракан оборудовани çуккипе алă айĕнче пуррипех çырлахмалла, – терĕ фермер хранилищĕпе паллаштарнă май.

Халĕ кунта хĕрсех ĕç пырать: çынсем çимĕçе тасатса тăварлама, сутма михĕсене тултараççĕ. Хранилище çурри ытла пушаннă ĕнтĕ. Кĕркунне вара пĕр çын кĕрсе тухмалăх кăна хуша хăварнă. «Тепĕр хранилище тума тытăнасшăн-ха, упрама вырăн çитми пулчĕ», – пĕлтерет Иван Васильевич.

Кĕркунне çанталăк тăруках шăнтса лартнипе республикăри чылай хуçалăх купăстана вăхăтра пуçтарса кĕртеймен. Халĕ вăл сутлăхра та сахалли сисĕнет, хаклансах пырать.

– Ют çĕршывран апат-çимĕç турттарма чарни савăнтарать. Пирĕн продукцие те хаклама тытăнчĕç. Тĕрĕссипе, эпир аякран турттармасăр, вырăнта туса илнĕ çимĕçпе хамăра тивĕçтерме пултаратпăр, – палăртрĕ фермер. – Чĕртаварпа хĕлĕпех тивĕçтерме упрамалли вырăнсем кирлĕ. Çавăнпа çулсерен пĕрер хранилище хута ярасшăн. Пурĕ пиллĕк тума палăртнă. Пурлăхпа техника базине çирĕплетсен малашне хамăра та çăмăлрах пулĕ, – теççĕ ашшĕпе ывăлĕ.

Вĕсен машинăпа трактор паркне такам та ăмсанмалла. Тракторсене ретĕн-ретĕн лартса тухнă, уй-хире шăвармалли агрегатсем таранах пур. Ĕçлекенсене турттарма – виçĕ автобус. Иртнĕ çул парк «Класс Орион 646» ятлă икĕ çĕнĕ тракторпа пуянланнă. Хăватлă техникăна хакланса кайиччен туянса ĕлкĕрнĕшĕн савăнаççĕ фермерсем.

– Пĕрне кăна илесшĕнчĕ малтан. Германире кăларнăскер ун чухнех 2,5 миллион тенкĕ тăратчĕ. Санкцие пула техника хакланма тытăнсан Раççей ялхуçалăх банкĕнчен кредит илсех тепĕр трактор туянтăмăр. Унтанпа темиçе уйăх кăна иртрĕ темелле, халĕ пĕри кăна 6 миллион тенке яхăн тăрать. Апла эпир мĕн чухлĕ укçа перекетленĕ! Хаксем асар-писер хăпарса кайиччен çĕрулми туса илмелли мĕнпур техникăна çĕнетсе юлтăмăр, – пĕлтерчĕ Иван Васильевич.

– Фермерсем ĕçлекенсем çителĕксĕррипе пăшăрханаççĕ. Ку енĕпе сирĕн мĕнлерех? – ыйтатăп унран.

– Хуçалăхра 35 çын вăй хурать. Хĕрÿ тапхăрта йыш 150 çынна çитет. Студентсем те практикăна килеççĕ. Юлашки вăхăтра çĕр ĕçне çамрăксем туртăнни савăнтарать. Пирĕн патра акă, тăватă çамрăк механизатор. Шел, специалистсем çителĕксĕр. Лартакан-акакан лаптăксем ÿссе пынă, тĕрлĕ культура туса илнĕ май пире тепĕр агроном, механизаторсем кирлĕ.

– Çĕр ĕçченĕн мĕнлерех пулмалла-ши?

– Çĕре, хăв туса илнĕ апат-çимĕçе юратмалла, йывăрлăхран хăрамасăр малалла утмалла, çанă тавăрса ĕçлемелле. Акă, Зоя Павлова агроном – чăн-чăн çĕр ĕçченĕ. Çуркунне, акнă-лартнă калчасем шăтма тытăнсан чĕререн савăнать вăл. Çăвĕпех вĕсенчен уйрăлмасть темелле. Кĕркунне уйра çитĕнтернине пуçтарса кĕртмесĕр те лăпланмасть, чунĕ канмасть унăн.

**Лариса АРСЕНТЬЕВА.**

# Ĕçлемесĕр çăкăр çиеймĕн

← 1-мĕш стр.

Обойсене çыпăçтарнă, урайне линолеум сарнă. Çутă, шыв, ăшă та пур. Хуларинчен пĕртте кая мар. Кĕр те пурăнма тытăн кăна. Пурĕ 11 хваттер пулмалла-мĕн. Çав шутран иккĕшне йышăннă ĕнтĕ.

– Çурта тул енчен те илемлетĕпĕр, ун таврашне тасатса хăтлăх кÿрĕпĕр, – пĕлтерчĕ ертÿçĕ. – Хваттер хуçисен çурт-йĕрпе коммуналлă пулăшушăн кăна тÿлеме тивĕ. Мĕншĕн тесен хуçалăх ĕçченĕсене, специалистсене хваттерсем тÿлевсĕрех паратпăр. Килччĕр, ĕçлеччĕр, ан ÿркенччĕр кăна.

### Çемье подрячĕ

«Чурачикский» усă пĕрлешÿре выльăх какайне вырăнтах тирпейлеççĕ. Ишлейре кăлпасси, çурма фабрикатсем хатĕрлесе кăларакан цех ĕçлет. Пурĕ 40 çын вăй хурать унта.

– Аш-пăш продукцине хатĕрлесе кăларакан предприятие 2000 çулта уçнă. Вырăнти чĕртавар çитсе пыманнипе ют çĕршыврипе те усă курнă. Вăл йÿнĕрехчĕ, анчах пахалăхĕ тивĕçтерсех кайман, – палăртать Евгений Шалеев.

Хуçалăх аталанса пынă май вырăнта туса илнĕ аш-пăшпа усă курма тытăннă. Çавна май çимĕç пахалăхĕ палăрмаллах лайăхланнă, хăйхаклăхĕ чакнă.

Пысăк цехра обрудованисем кĕрлени кăна илтĕнсе тăрать. Сысна, ĕне выльăх какайĕнчен кăлпасси, пĕлĕм, катлет тата ытти çурма фабрикат хатĕрлесе кăлараççĕ. Кăлпасси, аш тĕтĕмлекен цех та пур. Хатĕр продукци республикăра кăна мар, Чулхула, Чĕмпĕр, Тутарстан таранах саланать.

– Мари Республикине те хамăр продукципе тухасшăнччĕ, анчах суту-илĕве «кĕртмерĕç». Хăйсен аш-какай тирпейлекен предприятисене ура хурасран шикленчĕç-ши? – терĕ ертÿçĕ.

Предприяти хуçи – Ольга Шалеева. Евгений Федоровичăн кинĕ пулать вăл. Çапла, чĕртавар туса илнĕ, тирпейленĕ çĕрте çемйипех ĕçлеççĕ Шалеевсем. Ял бизнесне пуçарса яраканни вара çемье пуçĕ, кил хуçи. Ачисем çитĕнсе, бизнес сарăлса пынă май çак ĕçе çывăх çыннисене те явăçтарнă. «Капла предприятирен вăрласа тухни килех таврăнĕ. Кирек мĕн сиксе тухсан та теприн çине йăвантараймăн, пĕрлех явап тытмалла», – терĕ вăл ытарлăн кулса.

Тирпейлекен предприятие çамрăк ăрăва шанса панă. Хăй ытларах хуçалăхра тăрăшать Шалеев. Ялта çуралса ÿснĕ çыншăн выльăх-чĕрлĕх, çĕр ĕçĕ çывăхрах.

Çемье мĕн пуррипе çырлахса лармасть, бизнесне аталантармалли çĕнĕ çул-йĕр шырать. Иртнĕ çул пĕвере пулă ĕрчетме тытăннă. Унран тĕрлĕ çимĕç хатĕрлеççĕ. Вырăнтах тăварлаççĕ, тĕтĕмлеççĕ, сутаççĕ.

– Хальлĕхе пулă продукцине пысăк калăпăшпах хатĕрлейместпĕр, ку енĕпе вĕренсе пыратпăр кăна. Ĕмĕтре – хамăр продукцие сутма лавккасем уçасси, производствăна сарасси, – терĕ ертÿçĕ.

Сăмах май, Евгений Шалеев Чулхула облаçĕнче çуралса ÿснĕ. Чăваш Ен уншăн тахçанах тăван кил вырăнĕнче. Кунта вăл бизнесне йĕркеленĕ, арканнă хуçалăха тепĕр хут чĕртсе тăратнă, ял çыннисене ĕç вырăнĕсем туса панă.

– Тирпейлекен предприятисен хăйсен хуçалăхĕ пулни аван. Кирек мĕнле хушăннă хаклăх предприятирех юлать, ăна аталантарма каять. Шел, республикăра ун пек предприятисем сахалрах. 2014 çулта Шупашкарта аш-какай комбиначĕ хута кайрĕ. Инвесторăн тĕллевĕ – сысна комплексĕ тăвасси, сĕт, аш-какай туса илме тытăнасси, – палăртрĕ Шупашкар районне ĕçлĕ çулçÿревпе çитнĕ ЧР ялхуçалăх министрĕ Сергей Павлов.

Ялхуçалăх продукцийĕн хакĕсем ÿссе пынă май организацисенче, фермер хуçалăхĕсенче аш-какай, сĕт туса илесси лайăхланса пынине палăртрĕ министр. Чăн та, кăçал сĕт пĕлтĕрхинчен каялла йÿнелнĕ. Тупăш ытларах илес тесен унăн пахалăхне лайăхлатмаллине те каларĕ вăл.

**Лариса НИКИТИНА.**

# Йĕркесĕрлĕх коррупцирен пуçлансан

"Коррупципе çыхăннă ыйтусем ытларах муниципалитет харпăрлăхĕнче шутланакан пурлăхпа, çĕр лаптăкĕпе усă курнă чухне сиксе тухаççĕ. Ку тĕлĕшпе йĕрке тăвас тесе юлашки çулсенче нумай ĕçлерĕмĕр. Çакна кура пирĕн опытпа паллашма халĕ ытти регионсенчен те килеççĕ. Вырăнти администраци ертÿçисен учет тата тĕрĕслев ĕçне çирĕп йĕркелемелле, муниципалитетра вăй хуракансен вара хăйсене тÿрремĕн пырса тивекен ĕçсĕн яланах явапла пулмалла", – палăртнă Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев коррупцие хирĕç кĕрешекен координаци канашĕн черетлĕ ларăвĕнче.



Сăнÿкерчĕке www.cap.ru сайтран илнĕ

Прокуратура пĕлтернĕ тăрăх – иртнĕ çул право хуралĕн çак тытăмĕнче тăрăшакансем коррупцие çыхăнăн 3300 ĕçе шута илнĕ. Йĕркесĕрлĕхе пĕтерме 1890 акт çырнă, суда 145 тавăç хучĕ тăратнă, тĕрĕслевсем хыççăн 21 уголовлă ĕç пуçарнă.

Раççей следстви комитечĕн управленине коррупци преступленийĕсем çинчен 409 хыпар çитнĕ. Вĕсене тĕпчесе 315 уголовлă ĕç пуçарнă, 60 млн тенкĕ ытла укçа шыраса илмелле тунă (тĕпчев пынă вăхăтра айăплисем 6 млн тенке тÿлесе татнă). 16 миллион тенкĕлĕх пурлăха арестленĕ.

Чăваш Республикинчи Шалти ĕçсен министерствинче вăй хуракансем пĕлтĕр коррупципе çыхăннă 492 преступление тупса палăртнă. Тĕпчесе вĕçне çитернĕ уголовлă ĕçсем тăрăх патшалăха кÿнĕ тăкак 544,7 млн тенкĕпе танлашнă. Тăкакăн пĕр пайне – 331 млн тенкĕне – саплаштарнă. 47 преступление шута илнĕ. Вĕсем тăрăх аслă вырăн йышăнакан 14 çынна айăпласа 34 уголовлă ĕç пуçарнă.

Ларура Муркаш районĕнчи ĕç-пуçа та хак панă. Маларах кунта Чăваш Енĕн Пурлăх министерстви муниципалитет пурлăхĕпе мĕнле усă курнине тĕрĕсленĕ. Республика ертÿçи районта тупнă йĕркесĕрлĕхсене тĕплĕн тишкермеллине палăртнă.

Коррупципе кĕрешес тĕллевпе республикăра пĕрлехи "хĕрÿ лини" йĕркелесшĕн. Ĕç тăвакан влаç органĕсенчи йĕркесĕрлĕхсем çинчен малашне çынсем телефонпа шăнкăравласа пĕлтерме пултарĕç.

## Экзамен хыççăн – Германие

Çĕрпÿри аграри технологийĕн техникумĕнче вĕренекенсем нумаях пулмасть тĕрлĕ категориллĕ тракторист-машинист удостоверенине алла илнĕ. Унччен маларах çул çинче ялхуçалăх техникипе çÿреме пĕлнине экзаменра кăтартнă. 14 студент хăйсене панă заданисене ăнăçлă пурнăçланă. Иртнĕ эрнере вĕсенчен 8-ăшĕ Германие тухса кайнă. Производствăпа çыхăннă практика вĕсемшĕн çак çĕршывра иртет.

## Йыш ÿсет

Хальхи вăхăтра Раççей ялхуçалăх банкĕн кредичĕпе усă куракансен йышĕ 40 пинрен иртнĕ. Кăтарту ÿссе пырать. Хушма хуçалăха аталантарма ипотека, потребитель кредичĕсене илекенсем уйрăмах нумай. Кăçалхи пĕрремĕш кварталта «Пенсионный» кредит парасси те ÿснĕ.

– Паян банк пулăшăвĕпе ялта, хулара пурăнакансем анлăн усă кураççĕ. Эпир хамăр клиентсене конкуренцие юрăхлă продукци тата процент ставки сĕнетпĕр. Кăçал потребитель тата хушма хуçалăха аталантарма паракан кредитсен процент ставкине иккĕмĕш хут чакарнă, – палăртнă банкăн Чăваш Енри филиалăн директорĕ Ирина Письменская.

*РФ Тĕп банкĕн 3949-мĕш номерлĕ генеральнăй лицензийĕ.*

*Реклама*

**Вăй патăр!**

# Сочине чăваш ялĕпе улăштарнă

**Унăн амăшĕ – Кубань казакĕсен таса йăхĕнчен, ашшĕ – Сочи таврашĕнчи грек. Йышлă çемьере паян тĕрлĕ наци çыннисем. Тĕслĕхрен, пĕр пиччĕшĕ Пушкăртстан хĕрне арăм тунă, теприн мăшăрĕ – мордвинсенчен. Аппăшĕсен упăшкисем – грек, казак çыннисем. Патăрьел районĕнчи Çĕнĕ Ахпÿртре пурăнакан Александр Сергеевич Тесленко пирки калатăп эпĕ. Вăл чăваш пикине кăмăлланă. Ку çеç-и? Чаплă Сочи хулине чăваш ялĕпе улăштарнă. Вунпиллĕкмĕш çул арăмĕн ялĕнче, Çĕнĕ Ахпÿртре, пурăнать.**

**Унпа эпĕ вырăнти ял тăрăх администрацийĕнче ăнсăртран тĕл пултăм. Пуçлăх пÿлĕмне çÿллĕ те кĕрнеклĕ, тĕм хура çÿçлĕ, ÿтне кăнтăр хĕвелĕ çапнă арçын кĕрсе тăчĕ те хăйĕн ĕç хучĕсем çине алă пусма ыйтрĕ. Çĕнĕ çын чăваш пулманнине тÿрех ăнкарса илтĕм. Çакна администраци ертÿçи те сисрĕ пулас. Эпĕ ыйту паричченех: "Ак çак çынпа калаçмалла сирĕн. Патшалăх тин çеç ĕçе пуçăнакан фермерсене грант парса хавхалантарать вĕт. Çавна тивĕçессишĕн конкурса тăратма документсем хатĕрлет", – терĕ.**

Кăнтăр çынни темерĕн, асли каланине тÿрех итлерĕ, хаваспах манпа пуплеме килĕшрĕ.

**– Александр Сергеевич, халь паракан ыйтупа сире ку таранччен пайтах йăлăхтарнă пулĕ. Пирĕн енчисем Сочине ятарласа канма кайма çулталăк тăршшĕпе укçа пухаççĕ. Унтан çитеççĕ те: "Çăтмах вырăнтан каялла таврăнас та килмест", – теççĕ. Чăваш Ене куçса килнĕшĕн куштанраххисем сиртен тăрăхлама пăхмаççĕ-и?**

– Тĕлĕнерех йышăнакансем пур паллах. Сочи чăннипех илемлĕ хула. Олимп вăййисем иртнĕ хыççăн кунти пурнăç тытăмĕ пушшех улшăнчĕ. Ытти тăрăхра пурăнакансене вăл илĕртет. Маншăн вара тĕлĕнмелли çук. Унти пурнăçпа пурăннă, вырăнсене йăлт пĕлетĕп. Эпĕ пахчара, уйра ĕçленĕ чухне чунпа канатăп. Çав тери килĕшет сад-пахча, çĕр ĕçĕ. Ачалăх кукамай патĕнче иртнĕрен те пулĕ. Вăл Майкоп тăрăхĕнчи Апшерон районĕнче пурăннă, пекарньăра ĕçленĕ. Пахчара виноград, персик, ытти темĕн тĕрлĕ çимĕç тăталман. Аслисене кура эпĕ те çĕр çинче чакаланма юратнă. Ачалăхри "тымар" тарăна кайнă курăнать, çавăнпа юрататăп ялхуçалăхне.

2000 çулта ывăл ачана çуратассишĕн кўçса килтĕмĕр ку тăрăха. Сочири больница вырăнĕнче тахçан малтан вылăх масарĕ пулнă текен сас-хура çÿрет. Çавăнпа мăшăрпа канашласан ывăл Чăваш Енре çуралтăр терĕмĕр. Ывăлсăр пуçне çемьере хĕр пур, вăл мăнук парнелеме ĕлкĕрчĕ. Ашшĕ-амăшĕ хулара пурăнать, мăнук ытларах чухне – ялта. Ăна кунта, таса та уçă сывлăшра çитĕнтерес килет.

**– Чăваш Республикин кăнтăрти ялне хăнăхма йывăр пулчĕ-и? Тем тесен те халăхсен менталитечĕ расна.**

– Кунта пĕр енче – тутарсем, тепринче чăвашсем пурăнаççĕ. Ман шухăшпа начар наци çук, начар çынсем тупăнаççĕ. Анчах вĕсем çине те ыттисем çине пăхнă пекех пăхмалла. Виçеллĕ, шайлашуллă пурăнма тăрăшмалла пирĕн. Сан умра, калăпăр, ÿсĕр-пÿсĕр, анчах вăл – çын. Ăна сывлăх сунни сăвапллă. Тепри мухмăр чĕртме укçа ыйтать. Эсĕ ăна хупа ĕçлеттерсе çав укçана пама тăрăш. Капла, тен, мухмăрсухмăрĕ те усăлĕ. Тепрехинче иртнине асаилĕ те çĕнĕлле шухăшлама пăхĕ.

Ку ялта хамăн кÿршĕсене мухтатăп. Питĕ аван çынсем. Ку енĕпе эпĕ чăннипех телейлĕ.

**– Нимĕншĕн те ÿкĕнместĕр апла.**

– Вунпилĕк çул хушшинче унта иртнĕ Олимпиадăна кайманшăн та. Хам çуралса ÿснĕ тăрăха çемьепе çÿретпĕр паллах. Шел пур чухне те Мăнкуна лекместпĕр. Шăпах çак уявра пирĕн çемье пĕрлехи йышпа пуçтарăнать. Казак, грек, пушкăрт, чăваш, мордва тата ытти наци çыннисем пур пуян йăхра. Кăçалхи праçнике лекесшĕн те... Темле пулать ĕнтĕ.

Май килмесен кунтах иртterĕпĕр. Эпĕ çывăхри чиркĕве тăтăшах çÿретĕп. Манăн килте турăш чылай, Александр Невскине сăнлаканни хама хÿтĕлекенни шутланать.

Ачасем пысăклансан Чăваш Енрех мăшăрпа венчете тăтăмăр.

**– Чăваш хĕрĕ мĕнле майпа сирĕн чунăра тыткăнланă-ха?**

– Унпа эпир пансионатра паллашнă. Вăл – повар. Пытармастăп, хамран 10 çул аслă. Пулас мăшăрпа чи малтанах кукамая паллаштартăм, вăл ĕлĕкхи турăш умĕнче пире пиллерĕ. Пĕлетĕр-и, манăн кукамай та, унăн аппăшĕ те, арăм та Мария ятлă. Ытахальтен мар пулĕ. Мăнуксенчен хĕр çуралсан ăна та çав ят хурăп.

**– Кăнтăр çынни чăвашра мĕнле апат-çимĕçе кăмăллать?**

– Хамăр патри рецептпа хатĕрленĕ борщ – апат сĕтелĕн патши. Хушăран арăм солянка, харчо, рассольник пĕçерет. Хам та пĕçеретĕп, ывăла та хăнăхтаратăп. Кăнтăр халăхĕн йăлисене пĕлсе ÿстĕр тетĕп.

Апат тути вăл е ку рецептпа çыхăннă тетĕр-и? Йăлтах çыннăн аллинчен, ĕç патне мĕнле чунпа пынинчен, ăна епле юратнинчен килет. Ку вара ачалăхра тымар илет. Япăх ĕç çук, начар ĕçлекен пур.

**– Кавказ тăрăхĕнче тăвансем пурăнăран хăй вăхăтĕнче унта çулсерен пулаттăм. Унти хĕрарăмсем кăна мар, арçынсем тăварлană-маринадлană пахчаçимĕç çав тери тутлăччĕ. Эсир ку ĕç çине мĕнле пăхатăр?**

– Купăстана, кишĕре, хăяра, помидора хам маринадлатăп. Арăм кĕленче савăта тата пахчаçимĕçе çуса çеç парать. Урăх ăна çывăха ямастăп, йăлт хам тăватăп. Пахчаçимĕçе те йăран çинчен хам пуçтаратăп.

Эпĕ ÿснĕ вырăнта, ту хысакĕсенче, мĕнле кăна ÿсен-тăран çитĕнмест! Упа сарри, хупах тата ытти çулçăсене пуçтарса тирпейлесен, ăшалана çĕрулмипе апата лартсан чĕлхе çăтса ямалла тутлă. Нимĕнле какай та кирлĕ мар.

"Çынсем укçа çинче утса çÿреççĕ, пĕшкĕнсе илмелле кăна", – тетчĕ кукамай. Хăй çакна кура тем тĕрлĕ усăллă курăк пуçтаратчĕ. Кашни йывăç-курăка тав тума манмалла маррине асаилтеретчĕ. Пĕшкĕнсе, чĕркуçленсе пуçтарни пуç тайнипе танах.

Кукамай ашшĕ-амăшĕн хуçалăхĕ ĕлĕк пысăк пулнă. Кулак тесе çемьене Çĕпĕре кăларса янă. Кукамайăн амăшĕ унтан каялла çуран утса çитнĕ-мĕн.

**– Хăвăр çуралса ÿснĕ тăрăхри çимĕçсем çинчен сехечĕ-сехечĕпе каласа кăтартма хатĕррине чухлатăп. Унта арпуса тăварланине е унран, çавăн пекех роза чечекĕнчен варени пĕçернине те пĕлетĕп. Сирĕн чăваш ялĕнчи пахчара мĕнле те пулин кăнтăр йывăçĕ çимĕç парать-и?**

– Кубаньри ту çинче ÿсекен терн, катăркас аван вăй илчĕç. Кăнтăрти розăсене, лавр çулçине илсе килнĕччĕ. Винограда ача чухне пăхса ывăннăран унпа тăрмашас килмест. Хуллисем кăнтăрти пек 20 метр тăршшĕ кайсан ÿстереттĕмччĕ. 3-5 метрлисем ытла илĕртмеççĕ. Пÿлĕмре лимон çимĕç парать. Чей курăкĕ, мимоза илсе килсе лартнăччĕ, анчах вĕсем кунта хунамаççĕ. Айва çитĕнмест, цитрус çимĕçĕсемшĕн те кунти çанталăк сивĕ. Ту çывăхĕнче ÿсекен сивве чăтăмлă йывăçсем илсе килсе лартма пулать паллах. Анчах эпĕ кăнтăра кайнă чухне кунта – хĕл, çĕр шăннă, пĕрле илсе килсен лартаймастăн. Çулла шăрăхра каятăн та – каллех нумай илейместĕн.

**– Апла Çĕнĕ Ахпÿрт чăвашĕсем пекех çĕрулми, севок çитĕнтеретĕр пулĕха? Е грант илме тăратнă бизнес-планра урăх ĕç палăртнă?**

– 4,5 гектар çинче ытларах "иккĕмĕш çăкăр" ÿстересшĕн. Тупăш паракан севок та туса илесшĕн. Пысăк процентлă кредит илсен таталма çав тери йывăр-çке. Çĕрулмипе, севокпа кунта куçса килнĕренпех ĕçлетĕп. Çĕр тăрантарнипе пурнăç тунă, малашне те çаплах пултăр тетĕп. Ĕçрен хăрамастăп, 14 çултах унăн лавне кÿлĕннĕ. Краснодарти ялхуçалăх институтĕнче "табак тата чей промышленноçĕн технологĕ" специальноçа алла илнĕ. Малашнехи тĕллевре пластик чÿречесенчен теплица хуçалăхĕ йĕркелес кăмăл пур.

**– Эпĕ пĕлнĕ тăрăх – çĕр ĕçлеме сирĕн техника çукрах. 4,5 гектар çинче çĕрулмине алă вĕççĕн лартас çук, кирлĕ техникăна ют çынран тилмĕрни те ĕç мар...**

– Çавăнпа фермер хуçалăхĕ йĕркелесе грант илме конкурса документсем тăратас терĕм. Ăнăççан çав укçапа техника туянасшăн.

**Ирина НИКИТИНА.**

Филологи наукисен кандидачĕ, литература тĕпчевçи Николай Степанович Дедушкин доцент 1915 çулхи мартăн 28-мĕшĕнче Тутарстанри Пăва районĕнчи Элшей ялĕнче хресчен çемйинче çуралнă. Ачаранах ашшĕ-амăшне кил-тĕрĕшре пулăшнă, шкулта та «5» паллăпа çеç вĕреннĕ. Ялти ытти ача пекех пĕчĕкренех ĕçпе пиçĕхсе ÿснĕ. Шел, хальхи вăхăтра ашшĕ-амăшĕ тĕпренчĕкне ĕç патне питех çывăçтармасть. Ăна пула çеç çын чапа тухать-çке. Ахальтен ваттисем: «Ӳркев ÿкерет, ĕç – çĕклет», – тесе каламан.



# Полковник та, ăсчах та

Шкулта вĕреннĕ чухне Николай Дедушкин общество ĕçне хастар хутшăннă, редколлеги йышĕнче пулнă. Çавна пулах вăл маттур, хастар, пуçарулă çитĕннĕ. Николай нумай вуланă, литература сăнарĕсене тишкернĕ. Ун чухне телевизор, интернет, кĕсье телефонĕ пирки ĕмĕтленме те пултарайман. Вăл литературăпа туслашнă, унти сюжета тишкернĕ.

1933 çулта Николай Дедушкин Хусанти педагогика техникумĕнчен ăнăçлă вĕренсе тухнă, ял шкулĕнче вăй хунă. Кунта вăл хăйне педагогика ĕçĕнче тĕрĕсленĕ: унăн ĕçĕ-хĕлĕнче ÿсĕмсем те, ăнăçсăр самантсем те пулнă. Тÿрĕ чунлă учитель çеç ачасен юратăвне тивĕçме пултарнине ăша хывнă: ачасене ятламалла мар, çапах пĕлĕве вĕсен чунне çитерме пĕлмелле. Вĕренекене айăплас тĕллев пулмалла мар, вĕсене кăсăклантарма, хавхалантарма тăрăшмалла, çапла майпа ĕçе юратма хăнăхтармалла. Ял шкулĕнче ăша хывнă ăсталăха вăл ĕмĕрĕпех малалла аталантарнă.

1940 çулта Николай Дедушкин Чăваш патшалăх педагогика институтĕнчен вĕренсе тухнă, çавăнтах чăваш литератури вĕрентекенĕ пулса ĕçлеме тытăннă. Кунта вăл хăйĕн литература тата критика ĕçĕсене пуçласа пичетленĕ. Анчах çамрăк ăсчахăн пултарулăх ăнтăлăвне вăрçă вучĕ татнă. 1940 çулхи сентябрь уйăхĕнче ăна Хĕрлĕ Çар ретне чĕнсе илнĕ. 1941 çулхи июнь уйăхĕнчен пуçласа вăл тăшманпа çапăçакан çар ретĕнче тăнă. Вăрçăра Николай Степанович взвод командирĕ, 15-мĕш çар политпайĕн аслă инструкторĕ, Байкалпа Амур леш енчи çар округĕн тата Инçет Хĕвелтухăçĕнчи çарсен политуправленийĕн ĕçченĕ пулнă. Полковник звание тивĕçнĕ. Çапăçури паттăрлăхшăн тата тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн ăна икĕ хутчен Хĕрлĕ Ялав орденĕпе тата тăхăр медальпе наградăланă. Вăрçă вĕçленнĕ хыççăн та Николай Степанович çартах юлнă. Унта 1960-мĕш çулччен хĕсметре тăнă. Ленинградра вăл хăйĕн мăшăрне Ангелинăна тупнă. Унпа вĕсем хĕрпе ывăл çитĕнтернĕ. Паянхи кун Татьянăпа Владимир Питĕрте пурăнаççĕ, иккĕшĕ те аслă пĕлÿ илнĕ.

1967-1978 çулсенче Николай Дедушкин Чăваш Ен Писательсен союзĕн правленийĕн ертÿçинче ĕçленĕ.

Вăл – çичĕ монографи, критикăлла чылай статья авторĕ. Хăйĕн хайлавĕсенче Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи тапхăрĕнчи литература ĕç-хĕлне тишкернĕ. Унăн тĕп ĕçĕсем: «Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи тапхăрĕнчи чăваш литератури», «Пăшалпа та, перопа та», «Кун-çул уттипе». Унсăр пуçне вăл очерксем, рецензисем, кĕске калавсем тата статьясем çырнă. 1968 çултан пуçласа И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче чăваш тата СССР халăхĕсен литературисен аслă преподавателĕнче ĕçленĕ. Чылай çамрăка литературăпа туслашма, тăван чĕлхене юратма вĕрентнĕ. Унăн ырă ячĕ халăх асĕнче ĕмĕрĕпех упранĕ.

**Нелли ДЕДУШКИНА.**
**Шупашкар хули**

# Нуша курнăшăн кулянмастăп

Пурнăçăм хаçатпа çыхăннă май унăн пĕлтерĕшне пысăка хурса хаклатăп. Çавăнпах ĕнтĕ «Хресчен сассинче» Муркаш районĕнче пурăнакан Параскովья Пяткова çырнă «Пурнăçа питĕ юрататăп» материала вуласан шухăша путрăм. Кун çул çинчен çырнă статьясене питĕ килĕштеретĕп эпĕ.

Манăн шăпа та нушапа çыхăннă. Эпир çичĕ пĕртăван, пилĕк ывăлпа икĕ хĕр. Пурте ĕçпе пиçĕхсе ÿсрĕмĕр. Мĕн кăна курман пулĕ пурнăçра! Анне чирлесен ĕне сума та вĕрентĕм. 7-мĕш класра вĕреннĕ чухне çултаlăкри шăллăмпа, шкула каймасăр, икĕ эрне больницăра выртрăм. Çĕрулми лартнă вăхăтра сухапуç тытни, хиртен йĕтем çине çур çĕрччен тырă турттарни, пÿлмене тырă кĕртни, уй-хирти улăма пухни, ăна урана хывни куç умне тухса тăрать. Атте ырăнĕнче пилорамăра хăма çурнине, ял тата колхоз кĕтĕвĕнче çÿренине, Атăл леш енне утă çулма кайнине епле манăн тата?!

Кил-йышра та йывăрлăхсăр пулман. Атте ĕçленĕ, анне чирленĕ вăхăтра пилĕк çухрăмри Карач шкулĕнчен таврăнсан тÿрех вутă хутаттăм, выльăх-чĕрлĕхе апатлантараттăм, шăвараттăм, тислĕк кăлараттăм.

Нуша курнă çын пурнăçа лайăх ăнланать. Кун-çул çапла килсе тухнăшăн никам та айăплă мар. Шăпа çакнашкал пулнишĕн тепĕр чух савăнатăп та. Ара, ĕçпе пиçĕхсе, тăвансене, юлташсене, кÿршĕ-арша пулăшса çитĕнтĕм. Çут тĕнчере çынна ырă тунинчен мĕн лайăххи пултăр? Халĕ те ялта е хулара пĕлĕшсене тĕл пулсан сывлăх сунатпăр, калаçатпăр, иртнисене асаилетпĕр. Лайăх çынпа калаçма та кăмăллă, унпа часах пĕр чĕлхе тупатăн.

Хальхи çамрăксем ĕçлеме питех юратмаççĕ, ĕçме-çиме, туртма кăмăллаççĕ. Ачана мĕн пĕчĕкрен ĕçлеме, йывăрлăха çĕнтерме хăнăхтармалла, пурнăç çулĕ çине тĕрĕс-тĕкел кăлармалла.

**Вячеслав ПЕРОВ. Куславкка районĕ, Кунер ялĕ.**

# Юнĕ – вĕри, чунĕ – çемçе


С. Журавлев сăнÿкерчĕкĕ

К.В.Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕ Иоаким Степанович Максимов-Кошкинский иртнĕ ĕмĕрĕн 50-мĕш çулĕсенче çырнă «Константин Иванов» пьесине сцена çине кăларчĕ. Малтанах вăл халăх умне çак ятпа тухнă, иккĕмĕш хутĕнче вара – «Тăвăл хыççăн тăвăл».

«Кăçал Раççейре – Литература, Чăваш Енре Константин Иванов çулталăкĕ пулнă май эпир те айккинче юлас темерĕмĕр, – палăртрĕ хăйĕн шухăшне РФ тата ЧР Патшалăх премийĕсен лауреачĕ Валерий Яковлев режиссер. – Çитменнине тата пирĕн театр аслă поэтăмăр ячĕпе хисепленсе тăрать. «Нарспи» сцена çинче чылай çул «пурăнчĕ». Халĕ ăна ытти театр лартать.

«Константин Иванов» пьеса паян куракан умне «Вĕри юнлă çемçе чун» ятпа тухать. Ку сăмахсем «Нарспи» поэмăран. Сетнере çакнашкал шăпа тухасса юмăç малтанах каласа хурать. Аслă поэтăмăра ăнланас тесен унăн хайлавĕсене вуламалла те вуламалла. Вăл пирĕн ăсра çеç мар, чунра та пулмалла».

«Вĕри юнлă çемçе чун» пьеса Константин Ивановăн пурнăçĕпе юратăвĕ пирки. Кунтах историре йĕр хăварнă сăнарсем те пур: Иоаким Максимов-Кошкинский, Федор Павлов, Аслă вĕрентекенĕмĕр Иван Яковлевич Яковлев.

Сăнарсем «Нарспи» поэмăри йĕркесемпе те уса кураççĕ. Праскин (ЧР тава тивĕçлĕ артисчĕ Оксана Драгунова вылять) кун-çулĕ те тĕп сăнарăнни евĕрех. Упăшки Микихвер (Николай Сергеев) ăна Тăхтаман пекех хĕнет. Константин Иванов (ЧР тава тивĕçлĕ артисчĕ Валерий Карпов) хăй те тепĕр чухне Сетнер сăмахĕсемпе калаçать. Аслă вĕрентекенĕмĕр сăнарне те ăста калăплать Сергей Павлов артист. Вăл вăхăтри çивĕч ыйтусем паян та çивĕчех. «Чăваш чĕлхипе сăвăсем çырма çук тени суя, – уççăн пĕлтерет хăй шухăшне Иван Яковлевич. – Кам чăваш чĕлхине чухăн тесе тиркет – çав «Нарспи» вулатăр». Мĕн тери ăслă сăмахсем! Çук, эпир мĕскĕн халăх мар. Тÿпене çĕкленнĕ чăваша çапла калама вăй-хал çитмест. «Пирĕн хăçан та пулсан театр пулĕ-ши?» – теççĕ пьесăра Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕренекенсем. Вĕсен ĕмĕчĕ пурнăçланчĕ. Пирĕн халăхăн литература та, театр та, ÿнерпе музыка училищисем те пур.

Вырăс халăхĕпе туслă пурăнмаллине те ытарлăн палăртать Иван Яковлевич. Патша саманинче вак халăхсене хисеплеменни никамшăн та вăрттăнлăх мар. «Хĕвел ăçта – эпир çавăнта. Хĕвел ăшшипе ăшăнакан планетăсем пек», – тет вăл. Паллах, çав çулсенче ăна чăваш ялĕсенче шкулсем уçма çав тери кăткăс пулнă.

Çамрăк Кĕçтенттин пурнăçĕ те çăмăл килмен. Вăл телейлĕ шăпапа савăнайман пулсан та хăй хыççăн анлă йĕр хăварнă. Ăна «чăваш Пушкинĕ» темелле. Полици агенчĕ вара тăрăхласа: «Эсĕ чăваш шăпчăкĕ е шăрчăкĕ?» – тет.

Паллах, кунта Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн пĕлтерĕшне те манмалла мар. Мĕн чухлĕ пултарулă çын тухнă çак вĕренÿ çуртĕнчен!

Спектакле юрă-кĕвĕпе илемлетни те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Вĕсене Валерий Яковлев пухса хатĕрленĕ.

Артистсем тăрăшса выляни куракансен чунне хускатрĕ. Вĕсем куççуль юхтарни, тăвăллăн алă çупни пьесăна пысăк хак пани пулчĕ. Иван Яковлевич калашле «аван çеç мар, питĕ аван» темелле. Çакăн пек хакларĕ вĕрентекен Константин Ивановăн «Нарспи» поэмине пьесăра.

Манăн вара Иван Яковлевăн сăмахĕ çумне çапла хушса хурас килет: чăваш чĕлхинчен ютшăнакан «Вĕри юнлă çемçе чун» спектакле кайса куртăр».

**Валентина ПЕТРОВА.**

## АХ, АНЧАХ...

### Хăрушă инкек

Шупашкар районĕнчи кĕтмен инкек тăвата çын пурнăçне татнă, 17-не амантнă.

Аслă çул хĕрринче çунса хуралнă «маршрутка», çапăнса лапчăннă çăмăл машинăсем, вилесем... Чуна ыраттаракан ÿкерчĕк вун-вун çын куçĕ умне тухса тăнă. Хăрушă инкек иртнĕ ытларикун, Кÿкеç поселокĕнче пулса иртнĕ. Малтанлăха палăртнă тăрăх – «SKODA» машина «MAN» автомобиле пырса тăрăннă. Груз турттаракан машина вара транспорт хирĕç килекен çул çине тухса маршрут автобусĕпе çапăннă. «Газель» водителĕ инкек вырăнĕнчен пăрăнса иртме хăтланнă, анчах йĕпе асфальт çинче техникăна тытса чарайман, аслă çул хĕррине тухса кайнă, йывăçа пырса тăрăннă. Хытă çапăннăран «Шупашкар-Çĕрпÿ» маршрутпа çула тухнă «Газель» хыпса илнĕ. Хытах сиенленнĕ микроавтобусăн алăкĕсем хирĕнсе ларнипе уçăлман. Вут-çулăмра виçĕ çын çунса кайнă, çав шутра 12 çулти хĕрача та. Йывăр аманнисенчен пĕри автобусран тухма пултарнă-ха, анчах васкавлă пулăшу çитнĕ тĕле унăн та чĕри тапма чарăннă. Пĕтĕмпе çул-йĕр аварийĕнче 17 çын аманнă. Улттăшне Шупашкара больницăна ăсатнă. Вĕсенчен виççĕшĕ – ача.

Инкек пирки Чăваш Ен Пуçлăхне Михаил Игнатьева пĕлтернĕ. Вăл пулса-иртнине тĕплĕн тĕрĕслеме, вилнисен çемйисене пулăшма хушнă. Йĕпе-сапаллă çанталăкра, каçхине çул-йĕр йĕркине пăхăнассипе водительсем хушшинче профилактика ĕçне туса пыма ыйтнă. Сăмах май, çак кун республикăра 95 çул-йĕр аварийĕ пулнă. Юрать, ыттисем пысăк инкекпе вĕçленмен.

### Çĕр парнеленĕ

Шупашкар районĕнчи Мăн Катраç ял тăрăхĕн пуçлăхĕн çумĕ тĕлĕшпе татах 6 уголовлă ĕç пуçарнă. Хальхинче ăна служба вырăнĕпе хăй пайтишĕн усă курнăшăн, сĕтев илнĕшĕн айăпланă.

Преступленисене 2010 çулта, Кăшавăш ял тăрăхĕн пуçлăхĕнче ĕçленĕ чухне тунă вăл. Суя документсем хатĕрлесе паллаканне хушма хуçалăха аталантарма 0,2 гектар çĕр уйăрса панă. Кайран унăн хуçи лаптăка харпăрлăха куçарнă. Çакăншăн лешĕ чиновника 20 пин тенкĕ парса «тав тунă». 2008 çулта хайхи чиновник ял тăрăхĕн пуçлăхĕн çумĕнче ĕçленĕ май паллаканне каллех Кăшавăшра 0,1 гектар çĕре харпăрлăха панă.

**Л. АЛА.**

# Алĕçĕ – чун киленĕçĕ

**Унăн кил-çуртне музейпе танлаштарма пулать. Çенĕкренех тĕрĕ илĕртет куçа. Пÿрте кĕнĕ май тĕлĕнмелли татах тупăнать: кашни стена тĕрĕпе тулнă, алăк каррисене, минтер пичĕсене тĕрлĕ эрешпе илемлетнĕ. Хĕр упраç кунĕ-кунĕпе тĕрĕ умĕнче ларни никама та тĕлĕнтермест паллах. Тен, хальхи вăхăтра тĕлĕнтерет те. Мĕншĕн тесен çамрăксем ку ĕçпе питех аппаланмаççĕ халĕ. Çитменнине чăтăм та çитмест вĕсен. 84 çулти кинемей иртен пуçласа сĕм çĕрлеччен шур пире тĕрлĕ тĕслĕ çиппе илемлетнине те ĕненес килмĕ вулаканăн.**

### Нина аппа тĕрĕ тĕрлет. Кам валли?

Сăмахăма малалла тăснă май хуравне те каласа хăварам: ачисем, тус-тăванĕ, чиркÿ, хăй валли тĕрлет. Нина Никифорова Патăрьел районĕнчи Тăрмăш ялĕнче пурăнать. Ку ĕçе ачаранах кăмăлланă вăл, хăех тĕрлеме вĕреннĕ. «Çÿçе çивĕтлеме çип тунине тĕрĕпе илемлететтĕм, – асаилет иртнине кинемей. – Тантăшсем тыта-тыта пăхатчĕç ăна». Ахальтен мар ĕнтĕ сăпайлă та ĕçчен хĕре хăйсен кассинчен аякка яман, пĕр урамра çитĕннĕ Петр Михайлович качча илнĕ.

Унăн тÿсĕмлĕхĕнчен тĕлĕнме пăрахаймастăп. Хăш-пĕр çĕвĕ çав тери вĕтĕ. Çиппе чиксе туртма куç вăйĕ пайтах кирлĕ-çке. «Тĕрлетĕрле куççăр юлатăн тетчĕç, – малалла сăмахлать вăл. – Халĕ те куçлăх тăхăнмастăп. Çур çĕрччен ларни те пулать».

Эпĕ пынă вăхăтра та юратнă ĕçĕпе аппаланатчĕ Нина аппа. Пысăк, хитре чечеклĕ ÿкерчĕке шур пир çине куçарать. «Вăхăта ахаль ирттерес килмест. Кунĕ-кунĕпе мĕн туса ларас? Шухăшпа чирлесе кайăн. Кун пек вара ĕç пулать. Тепĕр чухне çынпа калаçса вăхăта ахаль ирттернĕшĕн те чун вăркать», – куçне тĕрĕ çинчен илмесĕр калаçать хĕрарăм. Чăн та, пĕр минут та ахаль ларма хăнăхман пулас вăл. Ылтăн алли ватлăхра та канăç тупаймасть, йĕппе çип патнех туртăнать.

### Чăматан тулли парне

Турăшсем те тĕрлет вăл. Хăшне-пĕрне вĕтĕ шăрçапа. «Турăшсене тĕрлеме хăйнеевĕр йĕркене пăхăнмалла: пачăшкăран пил ыйтмалла, типĕ тытмалла. Мана Петĕр атте пил пачĕ. Кĕске вăхăтрах 15 турăш хатĕрлерĕм. Хăшне-пĕрне ялти чиркĕве тата Петĕр аттене парнелерĕм», – кăмăллăн калаçать кинемей. Сăмах май, вырăнти чиркĕве час-часах пулăшать вăл. Ырă туни каялла сăваппа таврăннине шанать.

Мăшăрĕпе ултă ача çуратса ÿстернĕ, пиллĕкĕшĕ ырă-сывă паян. Хĕрĕ Зоя амăшĕ пекех алăсти. Кинĕ Рита та тĕрлеме кăмăллать. Çавах та амăшĕ вĕсенчен ытлашшипех ирттерет. Ара, мăнукĕсем валли те тĕрлет вăл. Паян-ыран качча каяканни валли пĕр чăматан хатĕрленине каларĕ. Тепĕр мăнукне журналти ÿкерчĕк килĕшнĕ иккен. Ăна тĕрлесе пама ыйтнă. Шăпах çак тĕрре 25 кун эрешленине пĕлтерчĕ ватă. Çитменнине пĕрре кăна мар, икĕ хут. Пĕрне парнелесен теприне хăй валли хăварĕ. «Ку тупрана укçалла сутас теместĕн-и?», – кăсăклантăм эпĕ пÿлĕмри илеме ытараймасăр. «Тунас текенсем пур, анчах сутмастăп. Мана укçа кирлĕ мар. Çак пирĕштие темиçе çын ыйтрĕ, эпĕ хирĕçлерĕм», – вĕсенчен чунпа уйăрлма йывăррине пĕлтерчĕ Нина аппа.

Хатĕр тĕрĕсем шкапра та тулиех, тĕркемĕ-тĕркемĕпе. «Куравриcене» улăштарма черет çитсен вĕсене кăларать. «Мăнкуна хатĕрленсе кил-çурта тасатнă май ку тĕрĕсене илсе çăватăп, теприсене çакатăп. Утса çÿренĕ чухне ку ĕçе хамах пурнăçлатăп», – пĕтĕмлетрĕ калаçăвне кинемей. Хăй çавăнтах пуçланă ĕçĕ çине пăхса илчĕ. Ара, манпа калаçса лариччен йĕппе çипе миçе хутчен чиксе туртатчĕ. «Тĕрлемесен – чун канмасть», – тет вăл. Çакă уншăн кун-çул девизĕ пекех. Вăл тĕрĕпе чунне йăпатать, савăнать, куна усăллă ирттерет.





# Шăпа кулач çитермен



**Людмила Васильева – пултаруллă та тÿсĕмлĕ хĕрарăм. Ĕçри çитĕнÿсемшĕн тĕрлĕ Хисеп хучĕпе парнене тивĕçнĕ. Çавăн пекех вăл – ĕç ветеранĕ.**

Людмила Яковлевна Элĕк районĕнчи Пĕчĕк Шĕвĕш ялĕнче 1941 çулта çуралнă. Хĕрача пĕр уйăхра чухне ашшĕ вăрçă хирне тухса кайнă. Çавăн чухне юлашки хут çупăрланă вăл ăна. Чунĕ сиснĕ тейĕн. Тăван кил-çуртне урăх таврăнайман арçын. Люся та ашшĕ чĕрçийĕ çинче выляса савăнайман. Шăпа кулач çитермен ăна.

Çут тĕнчене килнĕ çыннăн вăй-хăват çитнĕ таран пурăнма тăрăшмалла. Люся та йывăрлăха чăтса ирттернĕ, хастар хĕр пулса çитĕннĕ. Арçын ачасемпе танах лашапа çÿреленĕ, тырă вырнă, утă-улăм пуçтарнă, ытти ĕçре пиçĕхнĕ. Вăл вăхăтра пурнăç çăмăл пулман. Çичĕ çултах ял кĕтĕвне пăхма килĕшнĕ. Кĕтÿ ачисене кăнтăр апатне ял халăхĕ черетпе çитернĕ. Çавна май выçлăхран хăтăлнă. Шкулта вĕренме вăхăт пулман, вăл 4 класс анчах пĕтернĕ.

14 çулти хĕр колхоз лашисене пăхнă. Çак ĕçре 4 çул вăй хунă. Пултаруллă та маттурскере Хурăнкасси ялĕн каччи Геннадий Васильев куç хывнă. Çамрăксем часах пĕрлешнĕ. Мăшăрĕ механизатор пулнă май Люсьăн вырма вăхăтĕнче комбайнпа унпа пĕрле ĕçлеме тивнĕ. Выльăх-чĕрлĕх пăхма юратаканскер Хурăнкасси ялĕнчи сурăх ферминче 20 çул тăрăшнă. Çавăнпах унăн çумне «сурăх Люсçи» ят хушăннă. Уншăн кÿренмест вăл. Çапла чĕнсен ăна пурте пĕлеççĕ.

Пурнăç пĕр тикĕс килмест. Мăшăрĕ 39 çултах уйрăлса кайнă. Хуйхă пуснă хĕрарăм сакăр ачапа тăлăха юлнă. Кĕçĕнни вара пилĕк уйăхра кăна пулнă. Мĕнпур йывăрлăха çĕнтерсе малалла пурăнма талпăннă вăл. Ун чухне газ та пулман-çке. Çавна май вут-шанкă та хатĕрленĕ.

Ачисем çамрăклах амăшне фермăна пулăшма çÿренĕ, кил-тĕрĕшре ĕçленĕ. Тĕпренчĕкĕсене пĕчченех ура çине тăратнă хĕрарăм. Шел те, икĕ ывăлĕн шăпи вăхăтсăр татăлнă. Вĕсен çемйисем те арçын тĕрекĕсĕр юлнă. Пурнăç тути-масине самай тутаннă хĕрарăмăн икĕ хĕрĕ Мускав хулинче пурăнать, тăваттăшĕ Шупашкарта тĕпленнĕ. Йыш вара пысăклансах пырать, унăн халĕ 16 мăнукпа 6 кĕçĕн мăнук.

2013 çулта вăйлă çил-тăвăл унăн пÿрт тăррине сирсе ывăтрĕ. Мĕнпур йыш харăссăн пухăнса ĕçлерĕ унта.

Людмила Яковлевна халĕ килĕнче пĕчченех пурăнать. Ачисем амăшĕ патне килсех çÿреççĕ, пулăшаççĕ. Люся выльăх-чĕрлĕх, кайăк-кĕшĕк усрать. Кил-çуртне таса тытать вăл, пур çĕрте те тирпейлĕ.

Хальхи пурнăçа ырласа: «Газ пур, шыв – пÿртрех, пенси укçине вăхăтра тÿлеççĕ, кашни ялта асфальт çул. Пирĕн тăрăх питĕ илемлĕ. Пĕве те, вăрман та çывăхра. Çапах ачасем темшĕн хуланалла туртăнаççĕ», – терĕ вăл пăшăрханса.

**Илья ЯКОВЛЕВ.**

**Элĕк районĕ, Хурăнкасси ялĕ.**

### Тĕллевлĕ усă курмалла

Амăшĕн капиталĕпе тĕллевсĕр усă курнăшăн саккунпа айăплаççĕ. Çĕнĕ саккун тăрăх – сертификат хуçи çурт-йĕр туянма е тума кредит организацийĕпе, кредит потребитель кооперативĕпе, çавăн пекех ипотекăпа тивĕçтерекен ытти организаципе килĕшÿ тума пултарать. Микрофинанс организацийĕсене ку списокран кăларнă. Унсăр пуçне кредит потребитель кооперативĕсем валли уйрăмлăхсем кĕртнĕ: патшалăх регистрацийĕ хыççăн виçĕ çул иртнĕ пулсан çеç организацин амăшĕн капиталĕпе ĕçлеме юрать.

Çавăн пекех саккун РФ Пенси фончĕн полномочине анлăлатнă. Маларах РФ Пенси фончĕн специалисчĕсем кирлĕ документсене сертификат илнĕ чухне кăна тĕрĕсленĕ, халĕ вара – амăшĕн капиталĕпе усă курмашкăн çырнă заявление пăхса тухнă чухне те.

Ку мерăсене патшалăх пулăшăвĕпе тĕллевсĕр усă курассинчен тата çынсене ултавçă серепине çакланассинчен хăтарас тĕллĕшпе йышăннă.

Асаилтеретпĕр, саккун тăрăх – сертификата хăть хăш вăхăтра та параççĕ. Çемьери иккĕмĕш е ун хыççăнхи пепке 2016 çулхи декабрĕн 31-мĕшĕччен çуралса çеç ĕлкĕртĕр.

Чăваш Енре сакăр çул хушшинче сертификата 59 пин çын илнĕ. Çурт-йĕр кредитне татма 27 пин çемье 9,9 млрд тенкĕлĕх патшалăх пулăшăвĕпе усă курнă.

2015 çулта амăшĕн капиталĕн виçи 453 пин те 26 тенкĕпе танлашать.

### Усăллă канашсем

• Калчана вăхăтра кăларса лартмалла. Ытлашши ÿссе кайнă калча начар вăй илет, чылай çулçи сарăхса тăкăнать. Ÿссе çитменни часах чĕрĕлет, анчах унăн çимĕçĕ каярах çитĕнет.

• Вăрра шăтма çителĕклĕ ăшă кирлĕ. Сăмахран, купăста 18-20 градус ăшăра 4-6 кунранах шăтса тухать, помидора, хăяра йĕркеллĕ шăтма 22-25 градус кирлĕ. Баклажанпа арпуса, дыньăна вара 28-30 градус.

• Çутă сахал, ăшă пÿлĕмре калча пĕр кунранах тăсăлса ÿсме тытăнать. Çавăнпа та 3-7 кун калчана сивĕрех пÿлĕмре тытмалла, ăшă çанталăкра верандăна кăлармалла. Вăй илсен ăшăрах вырăна куçармалла, анчах ытлашши ăшăра вăл ачаш çитĕнет.

• Калчана кăларса лартас умĕн усă вырăнти условисене хăнăхтармалла. Пĕрмай шăварсан, удобренисемпе апатлантарсан вăйлă ÿсме тытăнать. Çанталăк ăшăтсан парнике кăнтăрла уçмалла, каярахпа çĕрле те хупмалла мар.

**Кăларăма Валентина ПЕТРОВА хатĕрленĕ.**

# Раççей çĕнĕрен ялхуçалăх çĕршывĕ пулса тăрĕ-и?



Ялхуçалăх промышленноçĕ халĕ те Раççей экономикин ытти тытăмĕсенчен хăвăртрах аталанать. Çапла тума кунта майсем çителĕклĕ. Анчах малалла талпăнма темиçе чăрмав пур. Ура хураканскерсене пĕтермеллех тесе шухăшлать "СовЭкон" аналитика центрĕн ертӳçи Андрей Сизов.

### «Тĕпсĕр шăтăк» мар

Чылайăшĕн шухăшĕпе Раççейри ялхуçалăхĕнче йăлт япăх. Ума тӳрех тутăхнă комбайнсем, асар-писер курăнакан выльăх витисем, пылчăк çăрса тухайми çулсем тата ялан кăмăлсăр çынсем тухса тăраççĕ. Вĕсем хăйсем туса илекен чĕртавар хакĕ йӳнелни, ВТО, çанталăк пысăк тухăç пустарса илме май паманни пирки ӳпкелешеççĕ. Тухăçĕ савăнтарсан та вĕсен тĕлне кулянмалли тупăнать: ăна упрама вырăн çук-мĕн тата ытти те.

Ахаль çынсем кăна çапла шухăшласан юрĕччĕ-ха. Экономистсемпе чиновниксен пĕр пайĕ те çак шухăшпа килĕшме пăхать. Вĕсемшĕн ялхуçалăхĕ – экономикăна каялла туртакан тытăм, пĕрехмай укçа ыйтакан "тĕпсĕр шăтăк". (Сăмах май, пирĕн çĕршывра ялхуçалăхне тĕнче шайĕнчи пекех тимлĕх уйăраççĕ тени тĕрĕс мар. Америкăпа, Европăри çĕршывсемпе танлаштарсан, сахалрах пулăшаççĕ).

Чăннипе лару-тăру тахçантанпах çапла мар. 1990 тата 2000 çулсен пуçламăшĕнчи ялхуçалăхне "тĕпсĕр шăтăк" теме май пулнă, мĕншĕн тесен вăл ун чухне чăнахах вăйсăрланнă. Юлашки вăхăтра ку тытăм халăх хуçалăхĕн ытти енĕсемпе танах аталаннă, ӳсен-тăран отраслĕ – пушшех те. Юлашки икĕ-виçĕ çулта çак тытăмри ӳсĕм пĕтĕмĕшле экономикăрипе танлаштарсан темиçе хут пысăкланнă.

Раççей ялхуçалăхĕ аш туса илессипе, чăх-чĕп ĕрчетессипе, пĕрчĕллĕ культурăсем пуçтарса илессипе мухтанма пултарать. Совет тапхăрĕнчен пуçласа эпир чăннипех вăрăм çул утса тухнă: малтан хамăр валли ют çĕршывсенчен чи нумай тырă туяннă пулсан, халĕ ăна ыттисене чи нумай сутакан çĕршывсенчен пĕри пулса тăнă.

### Малалла ӳсĕм пулĕ-и?

Çакăн пек ӳсĕме упраса хăвarма пултарăпăр-и? Ахăртнех. Анчах çапла тума çăмăл килмĕ.

Раççейри выльăх-чĕрлĕх тытăмне çывăх вăхăтра халăхăн пурнăç шайĕ чакни ура хурĕ. Укçатенкĕ сахаллипе вăл аш-какай ытла нумай туянаймĕ. Эпир шутласа пăхнă тăрăх – кăçал выльăх тата чăх-чĕп ашĕ туса илесси 2000 çултанпа пуçласа чакĕ. Кун пек чух производствăна улăштарма та шикленмелле, анчах хамăр çĕршыва ашпа тивĕçтерме малтанхи çулсенче хывнă инвестицисем пулăшĕç.

Ытлашши аша ытти çĕршывсене сутма май пулĕччĕ, анчах ку тĕлĕшпе Раççей тĕнчере тивĕçлĕ вырăн йышăнайман. Çав вырăнăн пĕчĕк пайне те пулин çĕнсе илес тесен сахал мар вăй хумалла тата вăхăт иртет. Тепĕр тесен пирĕн çĕршыври выльăх-чĕрлĕх тытăмĕ тĕнчерипе тупăшма пултарать-ши? Хальччен вăл пулăшу майĕпе кăна аталаннă: патшалăх пулăшнипе тата ютран турттарнă тăкаксемшĕн аша çынсем хаклă хакпа туяннăран.

Ӳсен-тăран, тĕштырă çитĕнтерес ĕç калăпăшĕпе вара тĕнчери тупăшăва тухма пулать. Малалла ӳсĕм тума та майсем пур.

### Чылай-и пирĕн ирĕклĕ çĕр?

Совет тапхăрĕ хыççăн вуншар миллион гектар çĕр усăсăр выртни пирки час-часах асаилме юратаççĕ пирĕн çĕршывра. Çак çĕрсене "ĕçлеттерсен" тĕштырă производствине тата ӳстерме пулать-мĕн. Чăн та, совет самани хыççăн усă курман çĕрсен лаптăкĕ 1,5 хута яхăн ӳснĕ е 40 млн гектара (Казахстан территорийĕ чухлĕ) çитнĕ. Анчах çакнашкал ирĕклĕ çĕр пурри пире пуянтарах пулма пулăшаймĕ.

Пĕрремĕшĕнчен, нумайăшĕ акă мĕн пирки йăнăшать: тĕнчере ялхуçалăх çĕрĕ çителĕксĕр мар. Кăнтăр Америкăра кунашкал саппас темĕн чухлех, уйрăмах – Бразилире. Çак çĕршыв хальччен ялхуçалăхĕшĕн юрăхсăр тенĕ çĕрсене пахалăхлатса тухăçлă çарансен йышне кĕртме пултарнă. Америкăн та ирĕклĕ çĕр лаптăкĕсем çук мар.

Иккĕмĕшĕнчен, ӳсĕм тума çĕнĕ технологипе усă курмалла, инвестицисем хывмалла. Ку тĕлĕшпе Раççей тĕнчери ытти тăрăхсемпе тупăшма хатĕр-и? Çӳлерех асăннă Америка, Бразили, Кăнтăр Америкăн ытти çĕршывĕсем пирĕн конкурентсем шутланаççĕ. Вăйлă инвесторсем Африкăна та сăнаççĕ. Бразили пек ăнăçу тума пултарĕ-ши тесе пуç ватаççĕ. Вырăнта лару-тăру йĕркеленсе кайсан тата ирĕклĕ çĕр пĕр тытăма чăмăртансан пирĕнне кӳршĕллĕ Украина та вăйлă конкурентсен йышне лекĕ. Темшĕн-çке ку ыйту Раççей чиновникĕсене шухăшлаттармасть.

Вĕсем яланхиллех çĕре тухăçсăр "ĕçлеттерекен" харпăрлăхçăсене шырама тăрăшаççĕ, инвесторсен пирĕн çĕрсен патне кăмăл туртманнине асăрхасшăн мар.

Виççĕмĕшĕнчен, Раççейре пусă çаврăнăшне кĕртмелли çĕр ытла нумай мар, 40 млн гектартан 60 проценчĕ – кĕтӳ çӳретмелли вырăнсем тата унта нумай çул ӳсекен курăк çитĕнет. Майракаллă шултра вылăх валли кирлĕ пулсан вĕсене пусă çаврăнăшне кĕртме пулать, анчах асăннă тытăмра хальлĕхе ӳсĕм палăрмасть. Тĕп тата Çурçĕр-Хĕвеланăç округсен тавраш ĕнчи (пысăк хуласен çывăхĕнчи) ялхуçалăх çĕрĕсене сухаласа çĕнĕрен "ĕçлеттересcе" кĕтме кăткăс. Çурçĕр Кавказ тата Хура тăпраллă регионсем çĕршыва тăрантараççĕ. Унта яланхиллех нумай акаççĕ.

Пусă çаврăнăшне кĕртмелли ирĕклĕ çĕр Атăлçи тăрăхĕнче сахал мар, унашкал çĕрсем: Урал, Çĕпĕр, Инçет Хĕвелтухăçĕнче те пур. Кунти лаптăк 6-8 млн гектарпа танлашать.

### Мĕнпе малта пырать?

Ытти çĕршывсемпе танлаштарсан Раççейĕн мĕн лайăххи пур? Çĕр кăна мар, шыв-шур объекчĕсем те. Шыв пурри тĕнчери ялхуçалăхĕшĕн юлашки вăхăтра питех те пĕлтерĕшлĕ.

Пирĕн патра çĕре харпăрлăха илес ĕç тытăмне йĕркеленĕ. Кун пекки кӳршĕллĕ Украинăра çук. Пирĕн патра çĕр çав тери йӳнĕ.

Тĕштырă турттарас тĕлĕшпе Хура тинĕс халĕ пирĕншĕн "ĕçлеме" тытăнчĕ. Раççейпе Украина кăçал тĕнчене 60 млн тонна тырă тăратĕç, ку Европа çĕршывĕсенчен турттарнă калăпăшран 1,5 хут нумайрах. Икĕ çĕршыва пĕр çыхха çыхма паян, паллах, кăткăс, анчах тĕнчере Раççейпе Украинăна Хура тинĕс витĕмне пула пĕр регион пек хаклаççĕ.

Пирĕн çĕршывра транспорт тата экспорт тытăмĕ аталаннă. Кăнтăр Америка пиркиех çакна калаймăн.

Хамăрăн ырă енсене ыттисене мĕнле кăтартмалла-ха? Кун çинчен инвесторсене пĕлтерсех тăмалла: тĕнче шайĕнчи конференцисене хутшăнса е пĕлтерӳ центрĕ йĕркелесе. Хăш-пĕр инвесторсем пирĕн çинчен пачах та пĕлмеççĕ. Çывăх вăхăтрах Раççее Европăран е Америкăран инвестици çитессе кĕтме çук. Анчах Азире те вăйлă инвесторсем пур. Сăмахран, Китай, Перси заливĕнчи çĕршывсем.

Патшалăхăн ялхуçалăх тытăмĕнчи чарусен шутне чакармалла. Ку чĕртавара ют çĕршывсене сутассине пырса тивет – кăçал чарăва çĕнĕрен вăя кĕртнĕ, юлашки пилĕк çулта – иккĕмĕш хут. Интервенци тытăмне пăхса тухмалла, тепĕр чухне вăл хытах ура хурать.

Раççей ялхуçалăх надзорĕн налукне пăрахăçламалла. Ăна тĕнчери çĕршывсенчен тырă турттаракансем чĕртавара тĕрĕсленĕшĕн тӳлеççĕ. Ытларах чухне тĕрĕслевсем пĕлтерĕшсĕр. Тырра вăтам тата пысăк виçепе турттараканс енне кăна тĕрĕслемелле, ыттисене тӳлевсĕр йышăнмалла (Америкăра шăпах çакнашкал тăваççĕ).

Ку майсем ансат, вĕсене ытлашши тăкакланмасăр пурнăçа кĕртме пулать. Раççейри ялхуçалăхне вĕсем малалла талпăнма пулăшмалла. Анчах патшалăх ертӳçисем вĕсене пурнăçлама хатĕр-и? Татса калама хĕн. Ахăртнех, чылайăшĕн яланхиллех миллионшар гектар усă курман çĕрсем çинченех каласас килет. Вĕсен шучĕпе ялхуçалăхĕнче ӳсĕм тăваса шанаççĕ-ши?..

# Сĕте шывпа юхтараççĕ

Европа çĕршывĕсем тата Раççей пĕр-пĕрне хирĕçле санкцисем йышăннине пула Эстонире ытлашши сĕте ниçта хума пĕлмеççĕ. Хальхи вăхăтра хресченсем ăна тăкаççĕ е канализацие юхтараççĕ. Çакăн çинчен пĕлтернĕ Эстони парламентĕнче.

"Европăпа пĕрле эпир те Раççее хирĕç санкци йышăнтăмăр. Мускав хирĕçле йышăнупа хуравларĕ. Çакна пула пирĕн ялхуçалăхĕ шар курать. Сĕте тăкаççĕ е канализаци пăрахĕпе юхтараççĕ, вылăха пусаççĕ", – пĕлтерет "Российская газета" Эстони парламенчĕн депутачĕн сăмахĕсене илсе кăтартса.

Депутат сăмахĕпе санкцие пула уйрăмах ĕне тытакансем хур кураççĕ. Хальччен вĕсем хăйсен чĕртаварĕн пĕр пайне Раççее сутнă.

Ăна ĕненес пулсан Европа çĕршывĕсен канашĕ Эстоние чылай енчен витĕм кӳрет. "Эстони никама пăхăнман патшалăх тени пуш сăмах кăна. Евроканаш йышĕнче тăраканскер хăй пĕчченнимĕн те татса пама пултараймасть. Транзит тата тĕрлĕ йышши технологисем пирĕн тавар шутланаççĕ, анчах эпир вĕсене сутаймастпăр, мĕншĕн тесен хамăр тĕллĕн нимĕн те йышăнаймастпăр".



Раççей хаçат-журналĕ тăрăх Ирина НИКИТИНА хатĕрленĕ.

Астăвăм

# Георгий Орлов: «Шухăшсем – манăн чĕннĕ хăнасем»...

## (Ҫуралнăранпа – 90 ҫул)



Георгий Федорович Орлов – нимĕҫ фашисчĕсен вăрă-хурахĕсемпе хĕҫпăшал тытса ҫапăҫнă поэт. Вăл, вунсаккăрти каччă, 1943 ҫулта салтак шинелĕ тăхăнать те вăрҫă ҫулĕсемпе Украина, Белорусси, Польша урлă Германие ҫитиччен утать. Полкра радиостанци пуҫлăхĕ пурнăҫпа вилĕм хушшинчи хаяр тытăҫусенче сахал мар хурашур курнă, пысăк ҫухатусем тӳснĕ. Ҫапăҫусен вучĕ айĕнче нимĕнле йывăрлăха та парăнман, тиеннĕ хĕн-асап умĕнче те чун-чĕрепе хуҫăлса пуҫа усман. Ширанă – тупнă, позывнойсем сасă панă. Чăваш радисчĕн тимлĕхĕпе ҫаврăнăҫуллăхне пула пулăшу вăхăтра ҫитнĕ, ҫĕршер ҫынна вилĕмрен хăтарнă...

Харпăр хăйне пач хĕрхенмесĕр, кунĕн-ҫĕрĕн асапланса ҫывхартнă вĕсем Ҫĕнтерӳ кунне. Вăл ҫитессе шаннă, ĕненнĕ. Ҫак хăватлă ĕненĕве аслă вăрҫăн малтанхи кунĕсенчех ĕҫпе ҫирĕплетме тытăннă ҫамрăк Якур. Ун ҫинчен вăл «Вăрҫа манма юрамасть» асаилĕвĕнче куҫ умне туллин кăларать: «Ҫĕршывăмăр ҫине йăтăнса аннă йывăр самана маччийĕ мăннисемпе пĕрлех ачасен хул ҫурăмне те самаях пусрĕ. Аслисене эпир яланах пулăшма тăрăшнă: пире ҫавăн пек хăнăхтарнă. Саккăрмĕш класс пĕтертĕмĕр кăна – июнь вĕҫĕнчех, 1941 ҫулта, Атăл леш енне, йăлăма, вăрман касма ăсантăмăр. Норми пысăк, йывăҫĕсем шултра. Пĕр уйăха яхăн ĕҫлесе, ҫывăрнăҫывăрман пурăнса, урараН ӳкеслех ывăнтăмăр. Яла таврăнтăмăр та, тепĕр куннех ҫурла йăтса вырмана тухма тиврĕ. Кунĕпе тар тăкса вырни сахал пек, каҫалăк умне ирпе иртерех тăрас тесе, час-часах уйра ҫĕр каҫнă. Сентябрь-октябрьте шкултан килнĕ те, сумка хурса кăшт-кашт ҫырткаласан, тĕттĕме пăхмасăрах кĕлте турттарма е авăн ҫапма чупнă. Ноябрь пуҫламăшĕнче тантăшсенчен нумайăшĕ оборона тăрăхне тума Сăр хĕррине пычĕ»...

Пулас ҫыравҫă 1925 ҫулхи мартăн 29-мĕшĕнче Шупашкар районĕнчи Туликассинче чухăн хресчен кил-йышĕнче ҫуралнă. Ялти пуҫламăш, Иккассинчи вăтам шкулсенче пĕлӳ илнĕ. Ҫак ҫулсенчех Кӳкеҫпе Иккасси тăрăхĕнчи ҫамрăксем хушшинче хастар ĕҫленĕ. Кунта чăвашсен паллă композиторĕн тата драматургĕн Федор Павловăн, Николай Шупуҫҫынни поэтăн, Емельян Захаров критик-тĕпчевҫĕн, Уйăп Мишши поэтăн ҫамрăклăхĕ иртнĕ. Мĕн тери илемлĕ ҫутҫанталăк ку енче! Вăрманĕ те, юханшывĕ те, уй-хирĕ те чуна ҫĕклентерет. Пурăнас килет!

Тăван ҫĕре хӳтĕлеме, Ҫĕнтерĕве ҫывхартма пĕтĕм чун-хавалне панă Орлов радист. 1948 ҫулта вăл киле таврăнать, ВЛКСМ Шупашкар райкомĕнче пай пуҫлăхĕнче ĕҫлеме пуҫлать. Часах ăна райком секретарĕ пулма суйлаҫҫĕ. Ҫанă таврăса ĕҫе кӳлĕнет Георгий Федорович, ялтан яла, колхозран колхоза ҫӳресе вăрҫă ҫулĕсенче юхăннă хуҫалăхсене ура ҫине тăратма вăй хурать. Ĕҫри хастарлăхшăн ăна Чăваш АССР Аслă Канаш Президиумĕн Хисеп грамотипе наградăлаҫҫĕ.

Ҫак тапхăрта Георгий Орлов поэзире пирвайхи ҫирĕп утăмсем тăвать. 1950 ҫулхи ноябрь уйăхĕнче «Ялав» журналта «Мир пытăр ĕмĕр-ĕмĕре» сăвви кун ҫути курать. Ҫав тапхăрта вăл фронтра паттăрла вилĕмпе вилнĕ ашшĕне халалланă «Атте» сăвă ҫырать. Ҫапла майĕпен поэзи каҫалăкĕ умне тăрать.

1951-1954 ҫулсенче Георгий Орлов ҫар училищинчи комсомол ĕҫĕнче вăй хурать. «Вăрҫă хăрушлăхĕ вăл тинĕс хумĕ евĕр: пĕрре чакса каять, тепре вăйланса килет... – акă мĕнле пĕтĕмлетӳ тăвать вăл ҫав тапхăрта. – Ҫĕршыва хӳтĕлес ĕҫе пирĕн ҫитĕнекен ăрусене пĕчĕкренех юратса ӳстермелле. Тăван ҫĕршывăмăра, мире упрама яланах тĕреклĕ вăй кирлĕ. Унсăрăн май ҫук. Пирĕн хаҫат-журналсенче Салтака халалласа ҫырнă хайлавсем асра-тĕсре кăна пичетленеҫҫĕ. Салтак сăнарĕ те, вăрҫă ҫинчен ҫырни те кирлĕ. Ҫав тери кирлĕ! Вăрҫă хăрушлăхне манни – вăрҫа ҫывхартни тенĕ историе лайăх ăнланнă ҫынсем. Ҫакна пирĕн те асрах тытасчĕ». Ҫар училищинчен таврăнсан, пулас поэт «Ялав» журнал редакцийĕнче ĕҫлет, хăйĕн пĕрремĕш «Ҫутă ҫуркунне» кĕнекине пичетлесе кăларать.

1959 ҫулта, Чулхулари аслă шкултан вĕренсе тухсан, Георгий Орлова Чăваш кĕнеке издательствин илемлĕ литература редакцине ертсе пыма шанаҫҫĕ. Ҫĕнĕ ĕҫе ҫĕнĕ вăйпа пуҫăнать вăл. Тăватă ҫул та иртмест, поэта «Ялав» журналăн тĕп редакторĕ пулма ҫирĕплетеҫҫĕ.

«Пысăк хастарлăхпа пикенет ҫак ĕҫе Георгий Орлов, – палăртать Чăваш халăх поэчĕ Юрий Сементер. – Журнал валли чи лайăх произведенисем суйласа илессишĕн, авторсен йышне ӳстерессишĕн, ҫамрăк ҫыравҫăсене идейăллă тата профессиллĕ пиҫĕхӳ парассишĕн салтакла тимлĕхпе тăрăшать. Ҫамрăксем тенĕрен, шăпах ҫак ҫулсенче «Ялавра» Арсений Андреевăн, Юрий Айдашăн, Хĕветĕр Агиверĕн, Порфирий Афанасьевăн, Вениамин Тимаковăн, Иван Лисаевăн, Леонид Маяксен сăввисемпе калавĕсем умлăн-хыҫлăн пичетленме тытăнаҫҫĕ. Ҫавна кура унăн тиражĕ те чылай хăпарать. Ăна хамăр республикăри ҫынсем кăна мар, Атăлпа Урал хушшинчи, Ҫĕпĕрти, Инҫет Хĕвелтухăҫĕнчи чăвашсем йышлăн ҫырăнса илеҫҫĕ, юратса вулаҫҫĕ. Ҫапла вунпĕр ҫул ăнăҫлă туртса пырать тулли тиевлĕ лава Георгий Орлов».

Унăн пултарулăхĕнче совет ҫынни Тăван ҫĕршывăн Аслă вăрҫинче хаяр тăшманпа паттăррăн ҫапăҫнине кăтартакан сăвăсемпе поэмăсем сахал мар ҫуралаҫҫĕ. Вĕсен шутĕнче «Вилĕмрен те вăйлăрах», «Совет салтакĕ», «Экзамен» поэмăсем паллă вырăн йышăнаҫҫĕ. Вĕсем 1970 ҫулта «Тантăшсем» кĕнекере тухнă. «Совет салтакĕ» тата «Экзамен» поэмăсемшĕн Георгий Орлов Ҫеҫпĕл Мишши ячĕллĕ преми лауреачĕ пулса тăчĕ.

1974-1978 ҫулсенче вăл профессиллĕ ĕҫпе пурăнать. Нумай ҫырать, ҫĕнĕ кĕнекесем валли материал пухать. Ҫав хушăрах тăванла халăхсен чĕлхисенчен те нумай куҫарать, вĕсене хаҫат-журналта пичетлесе тăрать.

1978-1990 ҫулсенче Георгий Федорович Чăваш кĕнеке издательствин тĕп редакторĕнче ĕҫлет. Ҫитмĕлмĕш ҫулсен вĕҫĕнче вăл мана «Коммунизм ялавĕ» (халĕ «Хыпар») хаҫатран кĕнеке издательствине ĕҫлеме чĕнсе илчĕ. «Хаҫат вăл хаҫат, – терĕ тĕп редактор. – Пĕр-икĕ кун, эрне пурăнать, кĕнеке – ĕмĕрлĕхе. Ĕҫле, редакциле, куҫар та ҫыр. Ан ӳркен».

Малтан эпĕ ҫур ҫул ытларах ялхуҫалăх редакцинче редакторта, унтан наукăпа популярлă литература редакцийĕнче аслă редакторта ĕҫлерĕм. Пĕр сăмахпа каласан, Георгий Федорович мана кĕнекесене ҫутта кăларма вĕрентрĕ. Ăшă сăмахпа та, ятласа та.

Тĕп редактор пӳлĕмне кĕмессерен, эпĕ ăна тăтăшах ĕҫрен пушă вăхăтра хăйĕн «Тантăшсем» кĕнекине пăхса ларнине курат тăм. Вăл яланах «Экзамен» поэмине вулатчĕ. Пĕррехинче ун ҫинчен Шупашкар районĕнчи Платкари шкулта ĕҫлекен юлташĕпе Кесарий Михайловпа калаҫса ларнине те илтнĕччĕ.

«Шухăшсем – манăн чĕннĕ хăнасем», – терĕ ун чухне Георгий Федорович. – Вĕсем чĕнмесĕр килмеҫҫĕ. Халĕ те тӳпери пĕлĕтсем пек шăваҫҫĕ те шăваҫҫĕ. Эх, килеҫҫĕ те каяҫҫĕ. Эпĕ вĕсене «Экзамен» поэмăна кĕртеймерĕм. Кая юлтăм...»

«Экзамен» поэмăна ятлă-сумлă поэт Шупашкар районĕнчи Иккассинчи вăтам шкулта хăйпе пĕрле вĕреннĕ тантăшĕсене, асĕнчен тухман учителĕсене халалласа ҫырнă. «Эх, шухăш, шухăш... Вĕҫсĕр шухăш. Мĕнле-ха хăтăлăн унран? Хăватлă вăл е вăйсăр, шухă е хăш чухне кăштах мăран – кирек темле пулсан та, – ялан вăл пăлхатать чуна», – ҫак хĕрӳ сăмахсемпе пуҫлать поэт хăйĕн поэмине. Фронтовик иртнĕ вăрҫăн хăрушă кунĕсене асра тытса, вĕсем ҫинчен вулакана пĕлтерет. Шухăшĕпе вăл каллех тăван ялта, тăван килте. Шап-шурă ҫĕмĕрт енне чӳрече уҫать те саркайăк юррине итлет. Ача-пăча хĕпĕртесе шкула ҫӳрет. Кĕҫех – экзаменсем: «Каникул. Ҫырлаллă ҫу – июнь, июль...» Мĕн чухлĕ ҫутă ĕмĕт-шухăш сăвăҫпа унăн юлташĕсен. Пĕри агроном пуласшăн, тепри – машинист, карап ҫӳретĕ Ҫурҫĕрте. Таҫта та ҫитеҫҫĕ ĕмĕт ҫулĕпе...

Поэма пирĕн пурнăҫри виҫĕ тапхăра – вăрҫă умĕнхи вăхăта, вăрҫă кунĕсене, Аслă Ҫĕнтерӳ хыҫҫăнхи тăнăҫ пурнăҫа – сăнланă. Вунсаккăрти каччăсем шкулта экзамен тытмасăрах вăрҫă хирне тухса каяҫҫĕ. Халĕ вĕсем пач урăхла экзамен тытаҫҫĕ. Тăван ҫĕршыва чунтан юратнине, парăннине, хăйсен хăюллăхĕпе паттăрлăхне кăтартмалла.

Ӳте кăшлатчĕ пуля, хурлăх...  
Пурне те чăтрăмăр тем чул?  
Сивве те чăтрăмăр,  
Ҫука та  
Сахал-и куртăмăр?

Совет салтакĕсем вăрҫăри йывăр экзамена чыслăн тытаҫҫĕ. Хура вăйсем Хĕвеланăҫĕнче халĕ те йăшăлтатаҫҫĕ. Поэт пур халăха ялан сыхă пулма, ҫав хура вăйсемпе кĕрешмелли тепĕр экзамен тытмашкăн чĕнет.

Анчах та уншăн –  
Мирлĕ куншăн  
Эпир нумай тар тăкмалла.  
Экзамен ку – мĕнпур мĕльюншăн:  
Ăна кашни ҫын тытмалла.

Георгий Орловăн сывă чухне вăтăрхĕрĕх кĕнеке те тухрĕ. «Экзамен» поэма паян та чĕрере. Эсир те, Георгий Федорович, ялан пирĕн вулакансен асĕнче пурăнатăр.

**Герман ЖЕЛТУХИН.**

ЧĂВАШ НАЦИ ТЕЛЕКУРАВĔН ЭРНЕЛĔХ ПРОГРАММИ

**Тунтикун, апрелĕн 6-мĕшĕ**

7.00 «КАҪХИ ТĔЛПУЛУ» (12+)  
7.30 «НАОБУМ» (12+)  
8.00 «СЛЕД В ИСТОРИИ» (12+)  
8.30 «НАШ КОНЦЕРТНЫЙ ЗАЛ» (12+)  
13.00, 16.00, 19.00, 22.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ  
14.00, 17.00, 20.00, 23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА  
19.15 «ЫЛТĂН ҪӲПҪЕРЕН» (6+)  
19.30 «КАҪХИ ТĔЛПУЛУ» (12+)  
20.30 «АКИЛБУПСЕР» (6+)  
21.00 «СИРЕ ТĔЛЛЕНМЕН ТЕ». ЧĂВАШЛА КУҪАРНĂ ФИЛЬМ (12+)

**Ытларикун, апрелĕн 7-мĕшĕ**

7.00, 13.00, 16.00, 19.00, 22.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ  
7.15 «ЫЛТĂН ҪӲПҪЕРЕН» (12+)  
7.30 «КАҪХИ ТĔЛПУЛУ» (12+)  
8.00, 14.00, 17.00, 20.00, 23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА  
8.30 «АКИЛБУПСЕР» (6+)  
9.00 «ПРОФИЛЬ ЗДОРОВЬЯ» (12+)  
19.15 «ТĔПЛĔ КАЛАҪУ» (12+)  
19.30 «ҪĔР ТИВЛЕЧĔ (12+)  
20.30 «ОТЛИЧНЫЕ СТУДЕНТЫ-2015» (12+)  
21.00 «КОМФОРТНЫЙ ГОРОД» (12+)  
21.30 «БУМЕРАНГ» (12+)  
22.00 «СЛЕД В ИСТОРИИ» (12+)  
22.45 «ТĔПЛĔ КАЛАҪУ» (12+)

**Юнкун, апрелĕн 8-мĕшĕ**  
**Профилактика с 9.00 до 17.00**

7.00, 13.00, 16.00, 19.00, 22.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ  
7.15, 13.15 «ТĔПЛĔ КАЛАҪУ» (12+)  
7.30 «ҪĔР ТИВЛЕЧĔ» (12+)  
8.00, 14.00, 17.00, 20.00, 23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА  
8.30 «ОТЛИЧНЫЕ СТУДЕНТЫ-2015» (12+)  
9.00 «БУМЕРАНГ» (12+)  
19.15 «ЯЛАН ЯНРА, ЧĂВАШ СĂМАХĔ» (0+)  
19.30 «ЛИТЕРАТУРА ТĔПЕЛĔ» (12+)  
20.30 «ТЕРРИТОРИЯ ЗАНЯТОСТИ» (12+)  
21.00 «ЯЛТА ПУЛСА ИРТНĔ ĔҪ». ЧĂВАШЛА КУҪАРНĂ ФИЛЬМ (12+)

**Кĕҫнерникун, апрелĕн 9-мĕшĕ**

7.00, 13.00, 16.00, 19.00, 22.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ  
7.15 «ЯЛАН ЯНРА, ЧĂВАШ СĂМАХĔ» (12+)  
7.30 «ЛИТЕРАТУРА ТĔПЕЛĔ» (12+)  
8.00, 14.00, 17.00, 20.00, 23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА  
8.30 «ТЕРРИТОРИЯ ЗАНЯТОСТИ» (12+)  
9.00 «НАШ КОНЦЕРТНЫЙ ЗАЛ» (12+)  
19.15 «ТĔПЛĔ КАЛАҪУ» (12+)  
19.30 «ЫЛТĂН ҪӲПҪЕРЕН» (12+)  
20.30 «КРУГЛЫЙ СТОЛ» (12+)  
21.00 «НА МИР СМОТРИТЕ ДОБРЫМИ ГЛАЗАМИ...»  
22.45 «ТĔПЛĔ КАЛАҪУ» (12+)

**Эрнекун, апрелĕн 10-мĕшĕ**

7.00, 13.00, 16.00, 19.00, 22.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ  
7.15 «ТĔПЛĔ КАЛАҪУ» (12+)  
7.30 «ЫЛТĂН ҪӲПҪЕРЕН» (12+)  
8.00, 14.00, 17.00, 20.00, 23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА  
8.30 «КРУГЛЫЙ СТОЛ» (12+)  
19.15 «ЮРĂ ҪАВРĂМĔ» (12+)  
19.30 «КИЛ ĂШШИ» (12+)  
20.30 «НАОБУМ» (12+)  
21.00 «ТАНЕЦ МАЛЕНЬКИХ УТЯТ». ЮРИЙ ЭНТИН. МЕЖДУНАРОДНЫЙ ФЕСТИВАЛЬ (0+)

**Шăматкун, апрелĕн 11-мĕшĕ**

7.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ  
7.15 «ЮРĂ ҪАВРĂМĔ» (12+)  
7.30 «КИЛ ĂШШИ» (12+)  
8.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА  
8.30 «АКИЛБУПСЕР» (12+)  
9.00 «НАОБУМ» (12+)  
9.30 «ЮН, КУҪҪУЛЬ, ЮРАТУ, ТАВĂРУ». ЧĂВАШЛА КУҪАРНĂ ФИЛЬМ (12+)  
11.30 «ВЯЧЕСЛАВ ХРИСТОФОРОВĂН ПУЛТАРУЛĂХ КАҪĔ» (12+)  
17.00 «ОТЛИЧНЫЕ СТУДЕНТЫ-2015» (12+)  
17.30 «ЛИТЕРАТУРА ТĔПЕЛĔ» (12+)  
18.00 «КАҪХИ ТĔЛПУЛУ» (12+)  
18.30 «ҪĔР ТИВЛЕЧĔ» (12+)  
19.00 «ЫРĂ КĂМĂЛПА» (12+)  
19.30 «ИКСĔЛМИ ҪĂЛКУҪСЕМ» (12+)

**Вырсарникун, апрелĕн 12-мĕшĕ**

9.00 «ЧУЛ ЧЕЧЕК». ЧĂВАШЛА КУҪАРНĂ ФИЛЬМ (12+)  
12.00 «ЮБИЛЕЙНЫЙ КОНЦЕРТ, ПОСВЯЩЕННЫЙ 50-ЛЕТИЮ ТВОРЧЕСКОЙ ДЕЯТЕЛЬНОСТИ С.А. КОНДРАТЬЕВА (12+)  
17.00 «КОМФОРТНЫЙ ГОРОД» (12+)  
17.30 «МИЛОСЕРДИЯ ДВЕРИ ОТВЕРЗИ НАМ» (12+)  
18.00 «ПРОФИЛЬ ЗДОРОВЬЯ» (12+)  
18.15 «ДЕНЬ С ИКОНОЙ» (12+)  
18.30 «КИЛ ĂШШИ» (12+)  
19.00 «ЯШ ЧУХ, ҪАМРĂК ЧУХ» (12+)  
19.30 «ЮБИЛЕЙНЫЙ КОНЦЕРТ ВАЛЕРИЯ КЛЕМЕНТЬЕВА» (12+)

## УЙĂХ КАЛЕНДАРĔ

| Число, кун | | Апрель, 1 – юнкун | Апрель, 2 – кĕçнерникун | Апрель, 3 – эрнекун | Апрель, 4 – шăматкун | Апрель, 5 – вырсарникун | Апрель, 6 – тунтикун | Апрель, 7 – ытларикун |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ХĔВЕЛ | тухать | 5.23 | 5.20 | 5.18 | 5.15 | 5.12 | 5.10 | 5.07 |
| | анать | 18.28 | 18.30 | 18.32 | 18.34 | 18.36 | 18.38 | 18.40 |
| Кун тăршшĕ | | 13.05 | 13.10 | 13.14 | 13.19 | 13.24 | 13.28 | 13.33 |
| УЙĂХ | тăхри | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулли уйăх (15.04) | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать |
| | кунĕ (12 сехет тĕлне) | 12-мĕш кун | 13-мĕш кун | 14-мĕш кун | 15-мĕш кун | 16-мĕш кун | 17-мĕш кун | 18-мĕш кун |
| | | Хĕр паллинче | Хĕр паллинче | Тараса паллинче | Тараса паллинче | Тараса паллинче | Скорпион паллинче | Скорпион паллинче |

## ПĔЛЕС ТЕНĔЧЧĔ...

### «Земство тухтăрне» – 45 çула çитиччен

**? Нумаях пулмасть радиопа «Земство тухтăрĕ» программăна 45 çула çитиччене хутшăнма пулать тени хăлхана кĕрсе юлчĕ. Халĕ иккĕленсе çÿретĕп: тĕрĕсех илтрĕм-ши? Унччен унпа 35 çула çитейменнисем çеç усă курма пултарнă. Хам 41 çултa, хулара ĕçлесе пурăнатăп. Тăван тăрăха, Елчĕк районне тахçанах куçас ĕмĕтлĕ. Анчах пурăнмалли çукки тытса тăрать. Патшалăх пулăшăвĕпе вара çурт-йĕр те туянма пулĕччĕ.**

**Вера М. Шупашкар хули.**

ЧР сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министрĕ Алла Самойлова пĕлтернĕ тăрăх – 2015 çултан «Земство тухтăрĕ» программăна 45 çула çитейменнисем те хутшăнма пултараççĕ (унччен 35 çула çитиччен пулнă). Çак енĕпе саккуна тепĕр çĕнĕлĕх кĕртнĕ. Енчен ĕç килĕшĕвне вăхăтсăр татсан пĕр хут паракан компенсаци тÿлевне каялла тавăрса пама тивĕ. Ялта пилĕк çул ĕçлеме килĕшнĕ тухтăра программăпа 1 миллион тенкĕ парса хавхалантараççĕ. Унччен ĕç килĕшĕвне вăхăт çитмесĕрех татнă тухтăрсен çак укçана патшалăха тавăрса памалла пулнă. Халĕ, çĕнĕлĕх кĕртнĕ хыççăн, 1 миллион тенкĕне тавăрса панипе пĕрлех компенсаци тÿлевне вăхăтра парса татмасан кашни куншăн штраф (неустойка) тÿлеттереççĕ.

Кăçал программăпа яла каякансене хавхалантарма 51 млн тенкĕ уйăрĕç, çав шутра республика бюджетĕнчен 2565 млн тенкĕ. «Земство тухтăрĕ» программа ĕçлеме тытăннăранпа, 2012-2014-мĕш çулсенче, ялсене 239 врач ĕçлеме кайнă.

### Чăнахах сиенлĕ-ши?

**Çинĕ чухне шыв ĕçни сиенлĕ тенине илтрĕм. Тĕрĕсех-ши?**

**Павел МАКСИМОВ. Муркаш районĕ.**

Апат çиес умĕн 30 минут маларах шыв ĕçни сиен кÿмĕ. Анчах çиес умĕн ĕçме сĕнмеççĕ. Апат çинĕ чухне хырăмлăхри сĕткене «çăвать». Типĕ апат çинĕ чухне тата апат çинĕ хыççăн ĕçме юрать. Нимĕн хушман напиток е шыв ĕçни усăллăрах.

### Вăрлăха юр çинех акаççĕ

**? Кÿршĕ çуркунне пахчара ешĕл çимĕç хăвăртрах шăтса тухма вăрлăха юр çине акса хăварма сĕнчĕ. Мĕнлерех мел-ши вăл? Юр çинех акнине халиччен курманччĕ-ха, капла вăрлăха шăнтса сая ямăп-ши? Йăрана мĕнле хатĕрлемелле?**

**Мария НИКОЛАЕВА. Етĕрне районĕ.**

Йăран тума хĕвел ÿкекен вырăн суйласа илĕр. Юра кĕлпе сапса тухăр – вăл хăвăрт пусăрăнĕ. Тăватă кунран азофоскăпа е нитрофоскăпа сапăр. Ирĕлнĕ май удобрени тăпрана сăрхăнать. Кали удобренийĕпе усă курма кирлĕ мар – пахчаçимĕçĕн çеçки ашкăрса ÿсме тытăннипе çимĕçĕ çитĕнеймест. Йăрана хура пленкăпа хупласан çĕр хăвăртрах ăшăнать. 10 кунран пленкăна илĕр те вĕри шывпа шăварăр. Çĕре тимĕр кĕреçе тарăнăш чавса тухăр, кăштах юханшыв хăйăрне хушăр.

Вăрлăха юр çинех акма пулать. Ирĕлекен юрпа вăл тăпрана анать. Вĕтĕ çарăк (редис) вăрлăхне пĕр-пĕрин хушшине 5 сантиметртан кая мар хăварса акмалла, кишĕре – 15-20 см. Ăшă, хĕвеллĕ кунсенче пленкăна илсе уçăлтармалла. Енчен вĕтĕ çарăкпа кишĕр çăра шăтса тухсан сайратмалла. Сайра пулсан рет хушшине акмалла. Сухана 1 тăваткăл метра 1,5-2 килограмм лартмалла. Унччен çăлтăр курăкĕ, юмăç курăкĕ ÿснĕ вырăнсене сухан лартма юрамасть. Ку çумкурăксем йĕпе тата йÿçек çĕре кăмăллаççĕ, сухан вара ун пек вырăнта япăх çитĕнет.



Пĕр-икĕ сăмах вăрлăх пирки. Ирех акма сивве чăтăмлă, ир пулакан вăрлăхсене суйласа илмелле.

Вĕтĕ çарăк – «рубин», «ранний красный», «французский завтрак», «корунд», «редис 18 дней». Вĕсен çимĕçĕсем пысăк мар, сĕтеклĕ, çурма пылак. Кишĕр – «лагуна F1», «пармекс», «марс F1», «забава 1», «каротель парижская». Сухан – «эплан», «шнитт», батун.

Юр çине акнă вăрлăх сивĕре çирĕпленет кăна. Ирĕлекен юр шывĕ вĕсен шăтаслăхне хăвăртлатать. Калча лайăх аталанать, çурхи сивĕсенче те чăтăмлă.

### Пенси ачана кăна тивĕçĕ

**? Упăшкапа çыръăнмасăр, гражданла мăшăрланупа пурăнтăмăр. Нумаях пулмасть вăл вилчĕ. Тăрантаракансăр юлнипе паракан пенсие ачапа иксĕмĕр те илме пултаратпăр-ши?**

**Нина МИХАЙЛОВА. Тăвай районĕ.**

Ашшĕ пулнине официаллă çирĕплетнĕ пулсан (çуралнине ĕнентерекен хутра ашшĕне кăтартсан) ача пенси илет. Анчах вăл сире тивмест. Мĕншĕн тесен мăшăрланăва хутпа çирĕплетмен.

**ХИСЕПЛĔ ВУЛАКАНСЕМ!**

**СĔНЎ-КАНАШ, ЫЙТУ-ХУРАВ МАЛАШНЕ «ХРЕСЧЕН САССИ» ХАÇАТРА ТА ТУХСА ПЫРĔ. СИРĔНТЕН ÇЫРУСЕМ, ЫЙТУСЕМ КĔТЕТПĔР.**

### Вăрăм çăмлă сысна



Е ăна "венгр мангалици" текен йăх теççĕ. 19 ĕмĕр пуçламăшĕнче Венгрире вăрман тата килти сыснасене пĕтĕлентерсе тĕнчене кăларнă. "Çак сыснана килте усрама питĕ меллĕ", – теççĕ ăна тытакансем.

Сăнĕ-пичĕпе, тĕсĕпе илĕртÿллĕ: çемçе çăмĕ сурăххăнни пек кăтраланса тăрать, шурă, хура, хĕрлĕ-хăмăр тĕслĕ вăл.

Сысна – çу паракан ăратран, анчах унăн салли питĕ тутлă. Сысна ашĕ "деликатес" шутланать, вăл çуллă сийлĕ, хăнăхнă сыснаннинчен усăллăрах, тутлăрах.

Мангалицăна усрасси йÿне ларать. Хĕле кĕрес умĕн çемçе çăмĕ хулăнланăран сивве чăтать, усă тÿпе айĕнче пурăнма пултарать. Ăна тытакансем çурисене чĕчĕ ĕмĕртекен амасене кăна сарайĕнче усраççĕ.

Çĕнĕ ăратра хир сыснин юнĕ чупнăран çав тери сывлăхлă, чирлемеççĕ.

Апат та тиркемеççĕ: курăк, йывăç тымарĕпе тураттине те çиеççĕ. Ирĕклĕ çÿреççĕ. Карта тытса çавăрнă вырăнта та çулталăкĕпех хăйсене аван туяççĕ. Апат тиркеменрен хăвăрт ÿт хушаççĕ, 200-450 килона çитеççĕ. Хĕлле утă-улăмпа пурăнаççĕ, çулла – пахчара ÿсекен курăкпа, çимĕçпе.

Мангалица сысна ами хăех çăвăрлать, тепĕр чух – юр çинчех, анчах пĕр çури те вилмест. 5-12 çура тăвать, вĕсене лайăх пăхать.

### Хурлăхан çырли мĕншĕн вĕтелет?



Тĕм тураттисене тĕрĕс касманран. Хăшĕ-пĕри ку ĕçе пачах пурнăçламасть. Çуркунне чирлĕ, сиенленнĕ туратсене йăлт касăр. Ватă туратсене те иртĕр. Халĕ сутакан шултра çырлаллă хурлăхан турачĕсем кивĕ сортсемпе танлаштарсан часах ватăлаççĕ. Çавăнпа тухăç чакать. 3 çултан аслă туратсене кассан та юрать.

Çуркунне пахчаçă тĕмĕ тавра çĕре тарăн чавса кăпкалатать, çивĕч хатĕрпе çумкурăкран тасатать. Хурлăхан тымарĕ тарăна кайманнине шута илмест, ырă тĕвас вырăнне ăна сиенлетет. Ку ĕçсене алăпа пурнăçласан хурлăханшăн аванрах.

Хурт-кăпшанкă сиенлетнĕрен, чир-чĕр аптăратнăран та çырла вĕтелет.

Хăш-пĕр сортăн тухăçĕ йăтăннăран туратсем çĕре çитиех усăнаççĕ. Кун пек чухне çырла час пиçеймест.

Шултра çырла паракан сортсем çĕр пулăхлăхне хăвăрт япăхлатаççĕ. Çĕре апат çитменрен çырла каллех вĕтелет. Капла ан пултăр тесен удобрени тăтăш хывмалла. Хурлăхана пĕр вырăнта 10 çултан ытла ÿстермелле мар, çĕнĕ çĕре куçармалла.

Çанталăк витĕм кÿни пĕлтерĕшлĕ. Чылай вăхăт ăшă тăнă хыççăн самай сивĕтни уйрăмах сиенлĕ.

### Тĕрĕс лартасчĕ

Çуркунне улма-çырла йывăççисене лартма шăтăка çапла хатĕрлетпĕр. Çак ĕçе çĕр ăшăнсан пикенмелле. Панулми тата груша йывăççисене 60 см тарăнăша (диаметр та çавнашкал пулмалла) лартмалла. Чие, черешня, слива валли тарăнăш 40, диаметр 60 см пулмалла. Органика удобренине (çĕрнĕ тислĕке) мĕн чухлĕ хывасси çĕр пулăхлăхĕнчен килет. Вăтам пулăхлă пулсан панулмипе груша йывăççисем валли лартмалли шăтăка 20-30 кг хумалла, вăрăллисем валли 10-20 кг та çитет. Минерал удобренийĕнчен фосфор (400-500 г суперфосфат) тата кали (100 г хлорлă кали) пуррисене кăна хураççĕ.

Нÿрлĕ вырăнта (çĕр айĕнчи шыв тăпра сийне 2 метртан çывăхрах тăрсан) йывăççисене сăрт е тăвайкки туса лартаççĕ.Унăн çÿллĕшĕ 1 метра çитме пултарать, диаметрĕ 2 метртан пĕчĕк пулмалла мар. Малтанах шалча çапса кĕртеççĕ. Ун тавра (1,5 см радиусра) çĕрнĕ тислĕк хураççĕ. Çĕре кĕреçе тарăнăш чаваççĕ. Йывăça шалча çумне çыхаççĕ. Сăртри тăпра кайран аяла аннине кура йывăç тымарĕн пуçĕ çĕр сийĕнчен 5-7 см çÿлте пулмалла. Çывăхри тăпрана илсе йывăç çумне пăрахаççĕ. Тымара шалча шăтăкĕ тавра пĕр пек вырнаçтармалла.

**Асра тытăр!** Тымара хупланă чухне шăтăк айккинчи çĕре лайăх таптăр. Шăтăк тĕпне çĕрмен тислĕк хума юрамасть. Шăтăка пулăхлă çĕр тăприпе кăна хуплăр. Енчен те йывăçăн тымар пуçĕ çĕр çÿллĕшĕнчен аяла анчĕ пулсан ăна кирлĕ пек çĕклемелле.

«ХРЕСЧЕН САССИ»
Обществăпа политика хаçачĕ
Индекс 54838
Учредительсем – Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви, Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăйтытăмлă учрежденийĕ

ДИРЕКТОР-ТĔП РЕДАКТОР – В.В. ТУРКАЙ
Редактор – В.В. Петрова
РЕДКОЛЛЕГИ:
В.В. Петрова – редактор
И.П. Никитина – корреспондент
Л.А. Никитина – корреспондент
Е.А. Трофимова – хаçат операторĕ

www.hypar.ru,
e-mail: hreschen@cbx.ru
Редакципе издатель адресĕ: Шупашкар, И. Яковлев пр., 13.
Телефонсем:
директор-тĕп редактор – 56-00-67,
пайсем – 56-34-63, 62-50-06, 28-86-68,
реклама пайĕ тел./факс – 28-83-70.
Факс (8352) 62-50-06

Хаçата 2013 çулхи раштав уйăхĕн 10-мĕшĕнче Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсемпе массăллă коммуникацисен сферинчи саккунсене пăхăннине сăнаса тăракан службин Чăваш Республикинчи управленийĕ ПИ ТУ 21-00305[1] регистрациленĕ.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă хатĕр оригинал-макетран «Чăваш ЕН» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар, И. Яковлев пр-чĕ, 13.

Графикпа 17 сехетре алă пусмалла.
17 сехетре алă пуснă.
Заказ 1170
Тираж 3385

* Рекламăпа пĕлтерÿсем. Реклама тексчĕсемпе пĕлтерÿсемшĕн вĕсене паракансем яваплă.